Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

1938
НОЙАБĔР
1
ЫТЛАРИКУН
252 (5065) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Цĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн йубилейлă пленумĕ—Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боĵшевиксен) Партин Тĕп Комитетне

Совет çамрăкĕсен праçник кунĕнче — комсомол çирĕм çул тултарнă кун — ПСÇЛКС Тĕпкомĕ хамăр çĕршыври пĕтĕм çамрăксен йачĕпе Ленинăн—Сталин аслă партине тата унăн Тĕп Комитетне хĕрӳлĕ салам йарать тата вĕсене ăрăнăн йуратнине каласа парать.

Хăй çуралнипе тата хăйĕн пурнăçĕпе комсомол Ленин—Сталин партине тивĕç. ПСК(б)П йертсе пынипе çамрăксен коммунисла Сойузĕ класлă çапăçусен ут-çулăмĕнче пĕрлешсе чăмăртанчĕ, ӳсĕ тата идейă тĕлĕшĕнчен пиçĕхсе çиĕпленчĕ. Комсомол 20 пин çынлă пысăк ар отрйадран çак çулсенче нумай мĕлйунлă организаци пулса тăчĕ.

Ленин—Сталин партийĕ пирĕн çамрăксе хăйулă та паттăр, шиксĕр пулма, революцилĕ сыхăлăхлă пулма вĕрентсе воспитани парса пычĕ. Социалисăм тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла шпионсене, вредителсене, диверсантсене ленинла комсомол малашне те пĕр шеллетăмасăр çĕмĕрсе пырĕ. Коммунисăм интерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре пирĕн комсомол йаланах тата пур çĕрте те партин ичăклă помошникĕ пулнă тата малашне те вăл çавăн пекех пулĕ. Çамрăксен коммунисла Сойузĕн членĕсем хăйсен амĕшĕн—Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боĵшевиксен) Партин шанчăклă ĕсемпе хĕрĕсем пулнă тата малашне ĕсем çавăн пекех пулĕç.

Сталин йулташ, комсомол ĕçĕнче тĕп та тăраканни вăл—пртилĕ руководулнă тата малашне те çавах пулĕ, ăтартса панă. Ленинла комсомолăн хăвачĕ, унăн çитĕнĕвĕсем ĕнтĕ ол çав кăтартăва йаланах асра ăнинчен, ăна манманнинчен тухса

çирĕм çул çакна кăтартса пачĕ: олĕцсем парти умĕнче шанчăклă пулни, вĕсем хăйсен идейисене шиса ĕненсе тăни, çамрăксем коммунисăм пĕтĕмĕшпех çĕнтерессине çирĕп шанса тăни комсомолăн вăйне малала ӳсме, ăна чечекленме пулăшса тăракан чĕрĕ те иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăрать тата малашне те çавăн пекех пулĕ.

Ленинла комсомол хамăрăн партийе вĕçĕ-хĕррисĕр йуратать. Кашни комсомолĕцпа кашни комсомолкăн çутă ĕмĕчĕ—боĵшевиксен парти членĕ пуласси.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ хăй ленинла комсомола саламланинче панă боĵшевикла критикăпа кăтартусене комсомолăн Тĕп Комитечĕ комсомола пĕр пăркаланмасăр йертсе пыма тата боĵшевикла пурнăçа кĕртме йышăнать. ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ çамрăксене идейăлă воспитани парас, комсомола тăшманла елементсенчен тасатас, комсомол работникĕсен çĕнĕ кадрсене йертсе пыракан вырăнене лартса пырас ĕçсенче тунă йăнăшсене çапла тĕрĕс критиклени — ленинла комсомола тĕреклетет, çав йăнăшсене боĵшевикла, пĕтĕмĕшпех тата вĕçне çитиех пĕтерес ĕçре ăна çĕнĕ вăй парать. Коммунисла партин геройла историне çине тăрса та тăрăшса вĕренсе пырса, комсомол ӳссе пыракан пĕтĕм ăрăва боĵшевисăмăн кĕрешӳлĕ традицийĕсем тăрăх вĕрентсе, революцилĕ сисĕмлĕхлĕ пулма, коммунисăмшăн пулас çапăçусем валĵи мобилизацилĕ хатĕр тăма вĕрентсе воспитани парать.

Совет çамрăкĕсем хамăрăн таса çĕр çине тапăнма хăтланакан кирек хăш тăшмана та çапса çĕмĕрме хатĕр тăраççĕ.

Сывă пултăр аслă та хăватлă, пурне те çĕнтерсе пыракан боĵшевиксен партийĕ!

Сывă пултăр боĵшевиксен Пĕтĕм Сойузри Коммунисла Партин бойевой штабĕ—ленинла-сталинла Тĕп Комитет!

ПСÇЛ[illegible] Комитечĕн [illegible]билейла пле[illegible]—СТАЛИН йулташа

[illegible]ă Иосиф Виссарионăвич. ПСÇЛКС [illegible] çул тултарнă кун Пĕтĕм Сойузри [illegible]сен Ленинла Коммунисла Сойузĕн [illegible]омитечĕ пĕтĕм комсомолĕцсемпе [illegible]молкăсен йачĕпе, пĕтĕм совет çам[illegible] йачĕпе Сире, хамăрăн учителĕ [illegible]йуратнă тусăмăра, тăван аттемĕре [illegible]лă, комсомолла паттăр салам йарать! [illegible]ăрăн пĕтĕм пурнăçун тата ĕçӳн [illegible]ĕнче Есĕр—Ленин ĕçне малала тăракан генилĕ çын — ĕççынни çам[illegible]не коммунисăмăн аслă ĕçĕшĕн кĕ[illegible]вĕрентеттĕр. Вĕсене капиталисăма пыракан хайар çапăçусенче пиçĕхсиреплететтĕр, вĕсене ленинисăм [illegible]этнă пек воспитани параттăр.

[illegible]ĕр, Сталин йулташ, боĵшевикла пар[illegible]ултăмĕш сиесĕн ĕçне тӳррĕмех йерт[illegible]пынă, вăл сиес хывнă никĕс çинче ле[illegible]нла комсомол çуралса тухнă, ӳссе çиреплеччĕ.

Ленин хушса хăварнисем тата комсо[illegible]ол ĕçĕ çинчен Есĕр кăтартса панисем ПСÇЛК Сойузĕн пĕтĕм ĕçне кирлĕ çулпа ытса пыраççĕ.

Есĕр рабочисемпе хресченсен ĕçĕшĕн хăвăра шеллемесĕр кĕрешни, Сирĕн пурнăçупа ĕçӳн çулĕ пирĕншĕн пуриншĕн те тăшман тĕлĕшпе боĵшевикла килĕшӳсĕр пулнин, ленинла принципиатлă пулнин, хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршывăмăра, совет халăхне вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнин, коммунисăм ĕçне пĕтĕм чунталпа йуратнин образецĕ пулса тăрать.

Пĕр Сирĕн йат кăна та пирĕн çамрăксен чĕрине паттăрлăх тата шиксĕрлĕх туйăмĕ кĕртет. Епĕр пирĕн организаци аслă Ленин йачĕпе тăнишĕн мухтанатпăр. Ленинĕц-сталинĕц пуласси, Ленинпа Сталин йевĕрлĕ пуласси—кашни комсомолĕцпа комсомолкăн, хамăр тăван çĕршыври кашни çамрăк çыннăн çутă ĕмĕчĕ.

Советсен çĕршывĕн çамрăк ăрăвĕ çакна хăйĕх пĕлет: Есĕр ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе ĕнтĕ унăн пурнăçĕ, телейлĕ те хаваслă.

Епĕр Сире, Сталин йулташ, çакна шантарса калатпăр: Марксăн—Енгĕĵсăн—Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми йалавне малашне те çӳлĕ тытса пыратпăр. Çамрăксене идейăлă воспитани парас, комсомол работникĕсен çĕнĕ кадрĕсене йертсе пыракан вырăнсене лартас ĕçсенче йулашки вăхăтра тунă йăнăшсене вĕçне çитиех пĕтерĕпĕр. Революцилĕ сыхăлăха тата çӳлерех çĕклĕпĕр, халăхăн ыл[illegible]ханлă хайар тăшманĕсене — троцкисла-бухаринла шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене, Йапони—Германи фашисăмĕн ытти тĕрлĕ агĕнчĕсене пĕр шеллемесĕр тăрă шыв çине кăларса тĕп туса пырăпăр.

Хамăрăн пĕтĕм шухăшсемпе ĕçсене, хамăрăн пĕтĕм вăй-хала, хамăрăн тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, коммунисăмăн аслă ĕçне хурăпăр, çапла майпа пире коммунисла парти тата Есĕр хăвăр, Сталин йулташ, пысăккăн шаннине чыслăн тӳрре кăларăпăр.

Марксисăм-ленинисăмăн революцилĕ теорине, парти коммунисăмшăн геройла кĕрешнин историне çине тăрса та тăрăшса вĕренĕпĕр, боĵшевисăма вĕренсе алла илĕпĕр, çапла майпа боĵшевикла партин мухтавлă традицийĕсем тăрăх кĕрешме те çĕнтерме вĕренĕпĕр.

Çĕнĕ техникăна алла илес ĕçре, халăх хуçалăхĕн пур отрăçлĕсенче те ĕç тухăçне ӳстерес ĕçре, хамăр тăван çĕршывăн оборонă тĕрекне çирĕплетес ĕçре, хамăрăн Çара, хамăрăн флота, хамăрăн авиацийе тĕреклетес ĕçре тата ытларах пуçарулă та дисциплинăлă пулăпăр, хамăрăн ĕçе татах темиçе хут ӳстерĕпĕр.

Комсомол малашне те хамăр Ленин—Сталинăн мухтавлă *партин шанчăклă помошникĕ* тата *резервĕ пулĕ, комсомолĕцсемпе комсомолкăсем* хамăрăн аслă аннемĕрĕн — Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боĵшевиксен) Партин тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулĕç.

Комсомолĕцсем Есĕр пĕрремĕш хут чĕнсенех хамăр тăван çĕршывăн тăшманне хирĕç тухма, ăна çĕр çинче те, тинĕс çинче те, сывлăшра та тĕппипех çапса аркатмала отпор пама—тĕнчери нимĕнле тăшман вăйĕ те чăтса тăрайми хайар отпор пама йаланах хатĕр тăраççĕ.

Хамăрăн таса çĕршĕн, коммунисла партишĕн, ĕççыннисене ирĕке кăлармали аслă ĕçшĕн—Сирĕн йатăрпа ĕмĕрлĕхех çыхăннă аслă ĕçшĕн кирлĕ пулсан, епĕр хамăрăн йунăмăра тумлам хыççăн тумлампа пама та хатĕр.

Сывă пултăр пирĕн Ленин—Сталинăн никам çĕнтерейми хăватлă партийĕ!

Сывă пултăр ССР Сойузĕнчи халăхсен тата пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăх массисен йуратнă çулпуçĕ, тĕнчери пролетарилĕ революцин аслă полководĕцĕ, пирĕн учител, пирĕн тус, пирĕн тăван атте—СТАЛИН йулташ!

Уйава хатĕрленеççĕ

Ишекри вăтам шкул (Ишлей р.) Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револĵуци 21 çул тултаракан уйава тимлĕн хатĕрленет.

Вĕренекенсем хушшинче пур предметсемпе те отличнă вĕренессишĕн Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва сарса йанă.

Шкулти хор кружокĕ çĕнĕ йурăсем вĕренет. Драмкружок Чехăвăн „Канитель" йатлă водевиĵне лартса пама хатĕрленет.

Нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче, уйав кунĕнче, шкулти художĕствăлă пултарулăх кружокĕ колхозниксем валĵи пысăк концерт лартса парать.

Мускав, Кремĵ. Сталин йулташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Пайан, Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕ 20 çул тултарнă кун, епĕр, Шупашкар хулинчи комсомол активĕ, Сире, Ленинпа пĕрле комсомола—боĵшевиксен партин шанчăклă резервине пăхса ӳстернĕ çынна, Сире, чечекленекен совет çамрăкĕсене телей туса паракана, Сире, аттене тата туса, пĕтĕм тĕнчери ĕççынниссен çулпуçне тата учителе хĕрӳлĕ комсомолла салам йаратпăр!

Совет влаçĕн условийĕсенче çеç, Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе, Есĕр пирĕн çине тăван атте пек тăрăшса пăхнипе чăваш çамрăкĕсем, пирĕн анлă çĕршыври пĕтĕм çамрăксем пекех, кулĵтурăлă та пуйан, телейлĕ пурнăç илчĕç. Вĕсен умĕнче наукă, искусствă тата кулĵтурă тӳписем патне пымали пур çулсем те уçă. Есĕр йертсе пынипе социалисăмлă аслă тăван çĕршывра çамрăк талантсене чечекленме пур условисене те туса панă. Чăваш çамрăкĕсем хушшинчен паттăр лĵотчиксем, хăйулă танкиссем, учонăйсем, музыкантсем, поетсем, малта пыракан стаханăвĕцсем, çĕршывăн йатлă çыннисем ӳссе çитĕнчĕç. Чăваш çамрăксен чи лайăх представителĕсем—вĕсене влаçăн верховнăй органĕсене суйланă халăхăн асларан та аслă шанăçне илмĕ, тивĕçлĕ пулчĕç. Чăваш республикĕнчи çамрăксен чи лайăх представителĕсен кăкăрĕсем çинче, вĕсем стаханăвла ĕçленĕшĕн, пирĕн никам пырса тĕкĕнейми чикĕсене сыхланă чух хăйулăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн панă ССР Сойузĕн орденĕсемпе медалĕсем çуттăн йăлкăшаççĕ.

Ленинградран Владивостока çити, Пăрлă океан çыранĕсем хĕрĕнчен Кавказ тăвĕсене тата Узбекистан тӳремĕсене çитиччен Совет çамрăкĕсем тăван Сталин çинчен пахаран та паха йурăсем йурлаççĕ. Çак хăватлă хорта телейлĕ сталинла тапхăрта ӳссе çитĕнекен чăваш çамрăкĕсен сасси те чаплăн йанрать.

Халăхăн ылханлă тăшманĕсем, йунлă фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандисем çамрăксенчен çак телейлĕ пурнăçа туртса илесшĕн пулчĕç, вĕсене социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсемсĕр хăварасшăн пулчĕç. Пӳтсĕрсем йăнăшрĕç. Совет халăхĕ чаплă чекиссен аллипе — Сирĕн паттăр соратник Николай Иванăвич Йежов йертсе пыракан наркомвнуделецсен аллипе пӳтсĕрсене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Епĕр Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, çакăн пек сăмах паратпăр: боĵшевикла сыхлăха пур майсемпе те ӳстерсе пыратпăр, Ленин — Сталин парти ĕçĕсем тăрăх, сирĕнтен вĕренсе пырса боĵшевисăма алла илĕпĕр. Халăх тăшманĕсемпе нихçан та килĕшмĕпĕр. Аслă Ленинăн ĕçĕсемшĕн шанчăклă пулăпăр. Фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла тата ытти агĕнчĕсене вĕçне çитиех тупса палăртăпăр тата çĕмĕрсе тăкăпăр.

Совет çамрăкĕсемшĕн Сирĕн йатран хакли урăх нимĕн те çук. Сирĕн йата чĕрере тытса епĕр социалисăм турăмăр тата малала туса пырăпăр. Сирĕн йатăр пире коммунисăмăн пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене тума хавхалантарать, Ленин—Сталин партийĕпе унăн Тĕп Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçтерет.

Социалисăмлă аслă тăван çĕршывшăн, коммунисăмшăн ĕçлессинчен чыслăраххи урăх нимĕн те çук. Уншăн епĕр хамăрăн çамрăклăх çулăмне, хамăрăн пĕтĕм пурнăçа паратпăр.

Фашисăма хирĕç пулас тытăçура епĕр йулашки татăклă çĕнтерӳ тăвăпăр, мĕншĕн тесен пире аслă Сталин йертсе пырать, аслă Сталин çĕнтерӳсем патне илсе пырать.

Сывă пултăр комсомол ăрăвĕ!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр аслă Сталин!

— о —

Комсомол ăрăвĕн праçникĕ

ПСÇЛКС çирĕм çул тултарнă йатпа Пысăк театрта пулнă чаплă пленумĕ

Паллă датăна—Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Коммунисла Сойузĕ çирĕм çул тултарнă куна—паллă туса, октабĕрĕн 29-мĕшĕнче Мускавра ССР Сойузĕн Пысăк театрĕнче обшчĕствăлă организацисемпе пĕрле Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Коммунисла Сойуз Тĕп Комитечĕн йубилейлă пленумĕ пулса иртнĕ.

Театрта хаваслă та телейлĕ боĵшевикла çамрăксем туллийех.

Пленума пухăннисем Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов, Жданăв, Хрушчов, Булганин, Косарĕв, Буденнăй, Шверник йулташсене хавхаланса саламласа кĕтсе илеççĕ.

„Сывă пултăр Сталин йулташ!", „Сталина салам!", „Сталин йулташа—комсомолла „урра!", „Сывă пултăр Молăтăв йулташ!", тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн çекретарĕ Косарĕв йулташ, ПСÇЛКС çирĕм çул тултарнă йатпа пухнă чаплă пленума уçăлнă тесе пĕлтерет. Хисеплĕ президиума Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов, Хрушчов, Димитров, Телĵмăн, Хозе Диас йулташсене суйлаççĕ.

Пленум калама çук хавхаланса çĕкленсе, Сталин йулташ патне салам йама йышăнать.

Доклад тума Косарĕв йулташ сăмах илет.

Косарĕв йулташ доклад тунă хыççăн ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕ А. А. Жданăв йулташ пысăк сăмах тухса калать. Жданăв йулташа нумайччен тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ.

Пленума саламлама Мускаври, Ленинградри малта пыракан стаханăвĕцсем, совет интеллигенцин представителĕсем, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинес-Çар Флочĕн делегацийĕ пынă.

Пленум ПСК(б)П Тĕп Комитетне, Молăтăв, Ворошилăв йулташсем патне Коммунисла Интернационалăн Ĕçтăвкомне—Димитров йулташ патне саламсем йанă. Пленум пĕтĕм комсомолĕцсене, комсомолкăсене, пĕтĕм совет çамрăкĕсене чĕнсе çырнă çырăва йышăнать.

* * *

Ленинла-сталинла комсомол çирĕм çул тултарнине—совет çамрăкĕсен геройла пурнăçĕнчи аслă куна пĕтĕм çĕршыв чаплăн уйавланă.

Комсомол çирĕм çул тултарнă мухтавлă кун йачĕпе Ленинградра, Кийĕвра, Свердловскра, Хабаровскра, Алма-Атара, Бакура, Магнитогорскра, Калининра, Сталинградра тата ытти хуласенче, çавăн *пекех Совет Сойузĕнчи* йалсенче те чаплă пухусемпе пленумсем пулса иртнĕ.

(ТАСС).

— о —

Комсомол уйавĕ Шупашкарта

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă йатпа хула уйав тумĕпе илемленнĕ. Пур çĕрте те хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ, çулпуçсен портречĕсем, лозунгсем, плакатсем.

Хулари комсомолĕцсемпе çамрăксем комсомол XX çул тултарнă йубилейа октăбĕрĕн 27-мĕшĕнчех уйавлама пуçларĕç. Пуçламĕш организацисенче йубилей йачĕпе пухусем, вечĕрсем пулса иртрĕç. Вĕсенче комсомолăн 20 çул хушшинче туса иртернĕ чаплă ĕçĕсене аса илчĕç, йубилейа хăйсем мĕнле парнесемпе кĕтсе илни çинчен каларĕç. Пионер отрйачĕсенче хăйсен вожатăйĕ—комсомол XX çул тултарнă йатпа уйрăм сборсем пулса иртрĕç.

Октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче Чăваш Государствă Академи театрĕнче ПСÇЛКС XX çул тултарнă йатпа чаплă лару пулса иртрĕ. ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çекретарĕ Никифăрăв йулташ комсомол çирĕм çул тултарни çинчен доклад туса пачĕ, ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕн йачĕпе парти Обкомĕн çекретарĕ Новикăв йулташ саламлă сăмах каларĕ. Лару Сталин, Косарĕв йулташсем патне тата Совет Сойузĕн Геройĕ лейтенант Винокурăв йулташ патне саламсем йачĕ. Лару хупăннă хыççăн художĕствăлă пултарулăх вечĕрĕ пулчĕ.

Çак кунах тата колхозник çуртĕнче, строителсен клубĕнче комсомол йубилейĕ йачĕпе çамрăксен вечĕрĕсем пу[illegible]а иртрĕç.

Октăбĕрĕн [illegible]ĕшĕнче Академи театрĕ комс[illegible]цсем валĵи „Альказар" пйесăна лартса пачĕ. Октăбĕрĕн 31-мĕшĕнче пионерсен çуртĕнче комсомолĕцсем валĵи хулари пионерсен вăйĕпе концерт лартса пачĕç.

Çак кунсенче Шупашкар хулинчи предприйатисенче, учреждениссенче, шкулсенче—пур çĕрте те пухусем, вечĕрсем пулса иртрĕç. Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнине çамрăксем çеç мар, çитĕннисем те уйавларĕç,—вăл пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ.

ÇĔРУЛМИ ХАТĔРЛЕВĔ

Патшалăха çĕрулми парса татас ĕçре татăклă улшăну кирлĕ

Пирĕн хаçатăн пайанхи номĕрĕнче Мускава тийесе йама çĕрулми хатĕрлесси мĕнле пыни çинчен сводкă пичетленсе тухать. Ку сводкăра епĕр патшалăха çĕрулми парса татас ĕç пайан кунччен питĕ йапăх пынине куратпăр. Октăбĕрĕн 30-мĕшне Мускава тийесе йама çĕрулми пĕтĕмпе те 49,5 процент çеç хатĕрленĕ. Мускава çĕрулми тийесе йарса пĕтермели срук — вăл октăбĕрĕн 25-мĕш кунĕ тĕлне пулнă. Анчах çапах та пайанхи куна епĕр пĕр район та хăй планне тултарнине курмастпăр-ха. Уйрăмах Канаш, Кувакинă, Йĕпреç, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Елĕк районĕсем пĕтĕм Республикăна кайала туртса пыраççĕ. Ку районсенче ĕçе йĕркелес вырăнне сăмах ытларах çаптараççĕ пулмала. Районри партипе совет руководителĕсенчен сăмах çаптарнине мар, ĕçе йĕркелессине кĕтет пĕтĕм чăваш парторганизацийĕ. Патшалăха çĕрулми тăратмали срук иртрĕ, çавăнпа га пĕтĕм вăйсене çак кунсенче çĕрулми хатĕрлевĕн планне тултарасси çине хурас пулать.

Парти райкомĕсен ку вирлĕ задачăна пурнăçа кĕртме массăлă-политикăлă ĕçе анлăн сарас пулать, судпа следстви органĕсен кулакла саботажа хирĕç вирлĕ çапас пулать. Пайанхи кун пĕтĕм районри парти активĕн йалта массă хушшинче çак ĕçе организацилес пулать. Чи малтанах йалти актива çĕрулми хатĕрлес ĕçе хутшăнтарас пулать, унсăрăн ĕç ӳсĕмлĕн кайас çук.

Çĕрулми хатĕрленĕ чухне пахалăх çине тимлĕн пăхас пулать. Патшалăх умĕнчи парăнма чи лайăх çĕрулми панипе татмала. Парти организацисен Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртуva анлăн сарса çак кунсенчех çĕрулми хатĕрлес плана пĕтĕмпех тултармала. Ку пур парторганизацисемшĕн те питĕ чыслă ĕç.

Мускава ăсатма çĕрулми хатĕрлес плана 1938 çулхи октăбĕрĕн 30-мĕш тĕлне мĕнле тултарни

СВОДКĂ

Районсем	Плана тултарнă (процентпа)	Пĕр кун планне тултарни (проц.)	
		октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче	Октăбĕрĕн 30-мĕшĕнче
Улатăр . . .	64,5	51	54
Кувакинă	27,0	6,3	15
Пăрачкав	30,1	22,6	16,6
Йĕпреç . .	28,1	16	8,0
Вăрнар . .	70,1	37	33
Елĕк . . .	46,5	39	26
Çĕмĕрле . .	81,7	76	8
Канаш . .	26,0	20	20
Шăхасан .	55,9	20	30
Тăвай . . .	54,7	62	43
Вăрмар. . .	65,5	10	56
Хĕрлĕ Чутай	33,3	20,6	—
Куславкка .	68,7	71,4	—
Пурĕ . .	49,5	27,4	—

Плана хăвăрт тултарассишĕн

УЛАТĂР. (Хамăр корр.) Çĕрулми хатĕрлес ĕç районра ку таранччен калама çук йапăх пынă. Ку ĕнтĕ чи малтан районри партипе совет организацийĕсен тата хатĕрлев кантурĕн ответлă работникĕсем государствăна çĕрулми парса татас тесе васкаманнинчен, çак ĕçе пĕтĕм актив вăйне мобилизацилеменнинчен килнĕ. Тата районра кун сиктерсех тухса тăракан „Ленинский путь" хаçат çак ĕçпе нимĕн чухлĕ те интересленменни пит те тĕлĕнтерет. Вăл октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче те çĕрулми хатерлевĕ районра мĕнле пыни çинчен пĕр сăмах та шарламасть.

Чăннипе районра мĕнле пырать-ха çĕрулми хатĕрлевĕ? Хатĕрлев кантурĕн Шупашкара телефон тăрăх парса тăракан „шанчăклă" сăмахĕ тăрăх, çĕрулми хатĕрлес план октăбĕрĕн 20-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тулмала пулнă. Анчах çак сăмах, тĕплĕн шухăшламасăр-тумасăр персе йанă сăмах, ĕçрен йăлтах уйрăмăн тăнă, ĕçпе тачăн çыхăнман вăл,—октăбĕрĕн 26-мĕшне район çĕрулми хатĕрлес плана мĕнпурĕ те 32 процент ытларах çеç тултарнă.

Мĕншĕн çапла? Мĕншĕн тесен, малтанах каларăмăр, ку ĕçе тивĕçлĕн организацилесе йаракан пулман. Парти райкомĕпе райĕçтăвком хатĕрлев кантурĕ çине шаннă: ку ĕçе вăл организацилет пулĕ-ха, тенĕ. Хатĕрлев кантурĕ хăйĕн вырăнсенчи агĕнчĕсем çине шаннă: ку ĕçе вĕсем организацилеççĕ пулĕ-ха, тенĕ. Агĕнтсем кунсеренех район центрне телефон тăрăх чăнкăртаттарнă: çанталăк начарри çинчен, вокзала çĕрулми турттарса пыма çул пылĵчăклă иккенни çинчен „сводкăсем" панă.

Çак „сводкăсем" чăн пурнăçпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăманни, ĕçри прорывăн тĕп сăлтавĕ çанталăк начарринчен килменни—пуриншĕн те паллă. Ку чăнах та çапла иккенне Суйкăн йалсовечĕпе (председателĕ Улĵушĕв йулташ) Çĕнĕ Ейпеç йалсовечĕ (председателĕ Телĵцов йулташ) тĕрĕсĕн те уçăмлăн кăтартрĕç. Асăннă йалсоветсем—район центрĕнчен чи инçетри тата чи пысăк йалсоветсем. Çапах, 40 километр тăршшинчи çул „пылĵчăклă" иккенне пăхмасăрах, асăннă йалсоветсем çĕрулми хатĕрлес плана октăбĕрĕн 29-мĕш тĕлне 87 процент тултарчĕç. Нойабĕрĕн 3-мĕш тĕлне плана пĕтĕмпех тултарма пулчĕç.

Çавăн пекех Засурско-Безднески йалсовечĕн мухтава тивĕç ĕçне уйрăмăн палăртса хăварни кирлĕ. Ку йалсовечĕн председателĕ пулса чылай çул хушши ĕçлекен Конăв йулташ, нумай пулмасть Ленин—Сталин партийĕн кандидатне куçнă хастарлă комсомолĕц, çĕрулми хатĕрлес ĕçре те, йаланхи пекех, хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Вăл йертсе пыракан йалсоветне кĕрекен „Красный партизан", „Красное Анютино", „Знамя", „Мордовия", „10 лет ЧАССР" колхозсем çĕрулми хатĕрлевĕн планĕсене октăбĕрĕн 29-мĕш тĕлне 100-шер процент тултарчĕç.

Паллах, çак хисепе тивĕç пархатарлă ĕç хăй тĕллĕнех пулман. Конăв йулташ йалсоветри актив вăйне тĕрĕс организацилеме пултарнă. Ку йалсоветри коммуниссемпе комсомолĕцсен тата партире тăман активлă стаханăвĕцсемпе стаханăвкăсен паха ĕçĕсем пĕтĕм районшăн пример пулса тăмала.

Стемас йалсоветĕнчи „Заря" колхоз хăйĕн çĕрулми хатĕрлев планне виçĕ кун хушшинчех тултарнă,—ун çинчен йалсовет председателĕ Рузайĕв йулташ район центрне телефон тăрăх тивĕçлипех хĕпĕртесе пĕлтернĕ. Анчах çак йалсоветĕнчи Ворошилăв йулташ йачĕпе тăракан колхоз çĕрулми хатĕрлев планне октăбĕрĕн 29-мĕш тĕлне çитсе те 16 процент çеç тултарни çав тери тĕлĕнтерет.

Çĕрулми хатĕрлев ĕçĕ районра çителĕксĕр пыни çинчен çак кунсенче парти райкомĕ, райĕçтăвком тата райкомол хăйсен ларăвĕсенче сӳтсе-йаврĕç. Ку ĕçе районри коммуниссемпе комсомолĕцсене тата совет аппаратĕнче ĕçлекен активлă работниксене—пурне те мобилизациленĕ. Октăбĕрĕн 29-мĕш тĕлне план 64 процента çити тулнă, колхозсем хăйсен планĕсене 78 процент тултарнă. Аслă Октăбĕр уйавне плана пĕтĕмпех тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ район центрĕнчи тата йалсемпе колхозсенчи активиссем.

Петĕр МИТТА.

★ ★

Комсомол йубилейне Çĕмĕрлере уйавлани

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче каçхине „Большевик" савăтăн клубĕнче хулари комсомолĕцсемпе çамрăксен чаплă пухăвĕ пулса иртрĕ. Вăл пухура ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарни çинчен Бобров йулташ доклад туса пачĕ. Бобров йулташ хăйĕн докладĕнче ленинла-сталинла комсомол граждăн вăрçи вăхăтĕнче тата сталинла пилĕкçуллăхсенче калама çук чаплă та паттăр ĕçсем туни çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Докладчик Сталин йулташ йатне асăнсан, залăра ларакансем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне, совет çамрăкĕсен тусне тата учителне саламласа нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ.

Унтан Калинкинă, Саĵскайа, Войкăвă йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем те уйава тăван çĕршыв аннемĕр валĵи чаплă парнесем хатĕрленипе кĕтсе илни çинчен каласа пачĕç.

Хар. Лисин.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакциленĕ. КĔСКЕ КУРС. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

VI СЫПĂК.

БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ИМПЕРИАЛИСĂМЛĂ ВĂРÇĂ ТАПХĂРĔНЧЕ. РОССИЙĂРИ ИККĔМĔШ РЕВОЉУЦИ.

(1914 ç.—1917 ç. март).

1. Империалисăмлă вăрçă пуçланса кайни тата унăн сăлтавĕсем

1914 çулти ийулĕн 14(27)-мĕшĕнче патша правитĕлстви пĕтĕмĕшле мобилизаци çинчен пĕлтернĕ. Ийулĕн 19-мĕшĕнче (августăн 1-мĕшĕнче) Германи Российăна хирĕç вăрçа тухни çинчен пĕлтернĕ.

Российă вăрçа кĕрсе кайнă.

Вăрçă пуçланиччен нумай маларах Ленин, бољшевиксем вăрçă пурпĕрех пулассине малтанах курса тăнă. Социалиссен пĕтĕм тĕнчери съесĕсенче Ленин вăрçă сиксе тухас пулсан, социалиссем хăйсене мĕнле тытассин ревољуцилĕ çулйĕрне палăртас тĕлĕшпе хăйĕн сăнĕвĕсемпе тухса каланă.

Ленин çапла кăтартса панă: вăрçăсем—капиталисăмăн пурпĕрех пулакан спутникĕсем. Йут çĕршывсене çаратасси, колонисем çĕнсе илесси тата вĕсене çаратасси, çĕнĕ рынăксем çавăрса илесси пĕре çеç мар капиталисăмлă государствăсем хушшинчи йут çĕрсене туртса илес тĕлĕшпе пыракан вăрçăсен сăлтавĕсем пулнă. Вăрçă капиталисăмлă çĕршывсемшĕн рабочи класа експлуатацилени пекех, йĕркелĕ те саккунлă йавлени пулса тăраҭ.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче тата XX-мĕш ĕмĕр пуçламĕшĕнче капиталисăм хăйĕн аталанăвĕн çÿлти тата йулашки сыпăкне—империалисăма татăклăнах ÿссе кĕрсен уйрăмăнах вăрçăсем пурпĕрех пулса пыма пуçланă. Империалисăм вăхăтĕнче капиталисăмлă государствăсен пурнăçĕнче капиталиссен вăйлă пĕрлешĕвĕсем (монополийĕсем) тата банксем ĕçе татса паракан вырăна йышăннă. Финанс капиталĕ капиталисăмлă государствăсенче хуçа пулса тăнă. Финанс капиталĕ çĕнĕ рынăксем, çĕнĕ колонисем, капитал туртарса тухма çĕнĕ вырăнсем, чĕртавар паракан çĕнĕ вырăнсем çавăрса илме ыйтнă.

Анчах XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчех ĕнтĕ çĕр чăмăрĕн территорине капиталисăмлă государствăсем пĕр-пĕрин хушшинче валеçсе пĕтернĕ пулнă. Çав вăхăтрах, капиталисăм аталанăвĕ империалисăм епохинче пĕр пек виçепе мар тата питех те сикĕмлĕ пулса пыраҭ: пĕр çĕршывсем, ĕлĕкрех малти вырăнта тăнисем, хăйсен промышленнăçне ыттисемпе танлаштарсан вăраххăнрах аталантарса пыраççĕ, теприсем, ĕлĕкрех кайа йулнă çĕршыв пулнисем, вăйлă сикĕмсемпе малтисене хуса çитеççĕ те вĕсенчен иртсе кайаççĕ. Империалисăмлă государствăсен економикăлă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи вăйĕсен соотношенийĕ улшăнса пынă. Тĕнчене çĕнĕрен пайласа валеçме тăрăшни пуçланса кайнă. Тĕнчене çĕнĕрен пайласа валеçессишĕн кĕрешни пурпĕрех империалисăмлă вăрçă патне илсе пынă. 1914 çулти вăрçă тĕнчене тата пăхăнса тăракан сферăсене пайласа валеçессишĕн пынă вăрçă пулнă. Вăл вăрçăна пĕтĕм империалисăмлă государствăсем нумай малтан хатĕрлесе пынă. Уншăн айăплисем—мĕнпур çĕршывсенчи империалиссем.

Уйрăмăнах çак вăрçа, пĕр йенчен, Германипе Австри хатĕрленĕ, тепĕр йенчен—Франци, Англи тата вĕсене пăхăнса тăракан Российă хатĕрлесе пынă. 1907 çулта виçĕ çĕршыв килĕшĕвĕ, йе Антантă,—Англи, Франци тата Российă сойуз туни,—пуçланса кайнă. Германи, Австро-Венгри тата Итали тепĕр империалисăмлă сойуз туса хунă. Анчах Итали 1914 çулти вăрçă пуçламĕшĕнче çав сойузран тухнă, кайран Антантă çумне пĕрлешнĕ. Германипе Австро-Венгрине Болгари тата Турци пулăшса пынă.

Империалисăмлă вăрçăна хатĕрленсе пырса, Германи Англипе Францин колонийĕсене туртса илесшĕн, Российăран—Украинăна, Пољшăна, Прибалтикăна туртса илесшĕн пулнă. Германи, Багдад чугунçулне туса, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче Англи пуç пулса тăнине хăрушлăх умне кăларса тăратнă. Англи Германин тинĕсри хĕçпăшаллă вăйĕсем ÿссе пырассинчен хăранă.

Патша Российĕ Турцине валеçессишĕн тăрăшнă, Хура тинĕсрен Вăтаçĕр тинĕсне тухакан проливсене (Дарданеллы) çĕнтерсе илесси çинчен, Константинопăле çавăрса илесси çинчен ĕмĕтленнĕ. Патша правитĕлствин планĕсене çавăн пекех тата Австро-Венгрин пĕр пайне—Галицине çавăрса илесси те кĕнĕ.

Вăрçă умĕн Германи таварĕсем Англи таварĕсене пĕтĕм тĕнчери рынăкран ытларах та ытларах хĕссе кăларма пуçланă пирки Англи вăрçăпа хăйĕн хăрушă конкурентне — Германине çĕмĕрсе тăкасшăн пулнă. Кунсăр пуçне, Англи Турцирен Месопотамине, Палестинăна туртса илсе, Йегипетра çирĕппĕн вырнаçса ларасшăн пулнă.

Франци капиталисĕсем Германирен çĕркăмрăкĕпе тата тимĕр-тăмăрпа пуйан Саар бассейнне тата Ељзас-Лотарингине тытса илесшĕн пулнă, Ељзас-Лотарингине Германи 1870—1871 çулсенчи вăрçăра Францирен туртса илнĕ пулнă.

Çапла вара империалисăмлă вăрçă патне капиталисăмлă государствăсен икĕ групписем хушшинчи пысăк хирĕçÿсем илсе пынă.

Тĕнчене çĕнĕрен пайласа валеçессишĕн пынă çак çаратуллă вăрçă мĕнпур империалисăмлă çĕршывсен интересĕсене пырса тивнĕ, çавăнпа та кайарахпа вăл вăрçăна Йапони, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем тата ытти чылай государствăсем хутшăннă.

Вăрçă—пĕтĕм тĕнчери вăрçă пулса кайнă.

Империалисăмлă вăрçăна хатĕрленессине буржуази хăйсен халăхĕсенчен питех те вăрттăн туса пынă. Вăрçă алхасса кайсанах, кашни империалисăмлă правитĕлстві: вăл мар кÿршĕ çине тапăннă, ун çине кÿршĕ тапăннă, тесе ĕнентерме тăрăшнă. Вăрçăн чăн тĕллевĕсене, унăн империалисăмлă характĕрне, йут çĕршывсене туртса илес характĕрне пытарса, буржуази халăха улталанă. Кашни империалисăмлă правитĕлстві вăрçă хăйсен тăван çĕршывне сыхлассишĕн пыраҭ, тесе каланă.

Халăха улталама буржуазине II Интернационалри оппортуниссем пулăшса пынă. II Интернационалăн социал-демокрачĕсем социалисăм ĕçне, пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери солидарнăç ĕçне ирсĕррĕн сутса йанă. Вĕсем вăрçа хирĕç тухман кăна мар, тата, йалтах урăхла, тăван çĕршыва сыхлас йалавпа витĕнсе, вăрçакан государствăсен рабочийĕсемпе хресченĕсене пĕр-пĕрин çине вĕскĕртсе йама буржуазине пулăшса пынă.

Российă империалисăм вăрçинче ăнсăртран мар Антантă майлă—Франципе Англи майлă пулса тухнă. Çакна асра тытас пулаҭ: 1914 çул умĕн Российă промышленнăçĕн чи кирлĕ отрăçлисем йутçĕршыв капиталĕн аллинче, пуринчен ытла Франци, Англи тата Бељги, урăхла каласан, Антантă çĕршывĕсен капиталĕн аллинче тăнă. Российăри чи кирлĕ металлурги савăчĕсем Франци капиталисĕсен аллинче тăнă. Металлурги пĕтĕмпе виçĕ чĕрĕк патнех (72 процент) йутçĕршыв капиталне пăхăнса тăнă. Çĕркăмрăк промышленнăçĕнче те—Донбасра—ĕç çавнашкалах тăнă. Нефҭ кăларас ĕç çуррине йахăн Англипе Франци капиталĕн аллинче пулнă. Вырăс промышленнăçĕ илекен усламсен чылай пайĕ йут çĕршывсен, пуринчен ытла—Англипе Франци банкĕсене кайнă. Çаксем пурте тата патша Франципе Англире тунă килĕшÿсем тăрăх миллиардшер тенкĕ займ илни патша йĕркине Англипе Франци империалисăмĕ çумне çыхса лартнă, Российăна çав çĕршывсен данници, вĕсен çурмаколонийĕ туса хунă.

Вырăс буржуазийĕ, вăрçă пуçласа, хăйĕн ĕçĕсене йусаса йама: çĕнĕ рынăксем çĕнтерсе илме, çар заказĕсене ĕçе кĕртсе тата ăна ваљљи тĕрлĕ хатĕрсем таратса пуйма шутланă, тата çав вăхăтрах вăрçăлла лару-тăрупа усă курса революцилĕ йухăма путарса лартма шутланă.

Патша Российĕ вăрçăна хатĕрленсе çитмесĕр пырса кĕнĕ. Российăн промышленнăçĕ капиталисăмлă ытти çĕршывсенчен питех те йулса пынă. Российăра кивĕ заводсем тата савăтсем ытларах пулнă, вĕсен ĕçхатĕрĕсем кивелсе кайнă. Çĕре тытса тăрассинче çурма-крепостной йĕрке пур чухне тата çуклăха, йухăнчăка тăрса йулнă хресченсен масси пур чухне, йалхуçалăхĕ вăрçăна нумай вăхăт хушши илсе пыма економикăлă çирĕп никĕс пулма пултарайман.

Патша пуринчен ытла крепостник-помешчиксем çине тайăнса пынă. Черносотĕнла шултра помешчиксем шултра капиталиссемпе блок туса çĕршывра тата Государтвеннăй думăра хуçа пулса тăнă. Вĕсем пĕтĕмпех патша правитĕлствин шалти тата тулти политикине хута кĕнĕ. Российăри империалисăмлă буржуази патша смодержави çине бронљилене чышкă çине шаннă пек шанса тăнă, самодержави, пĕр йенчен, ăна ваљљи çĕнĕ рынăксемпе çĕнĕ çĕрсем туртса илессине, тепĕр йенчен—рабочисемпе хресченчен ревољуцилĕ йухăмне путарса лартассине ĕçе кĕртме пултарнă.

Либерањнăй буржуази партийĕ—кадетсем—хăйне оппозици пулса тăнă пек кăтартнă, анчах патша правитĕлствин тулти политикине пĕр сăмахсăрах хута кĕнĕ.

Есерсемпе менљшевиксен вакбуржуалă партийĕсем, социалисăм йалавĕ айне пытанса, вăрçă пуçланă малтанхи вăхăтранпах халăха улталама—вăрçă империалисăмлă—вăрă-хурахла вăрçă пулнине пытарма буржуазине пулăшса пынă. Вĕсем буржуалă „тăван çĕршыва“ „Пруççи варвăрĕсенчен“ хÿтĕлеме кирлĕ, сыхлама кирлĕ тесе вĕрентнĕ, „граждăнла мир“ политикине хута кĕрсе пынă, çапла майпа, Германине социал-демократсем Германи патшин правитĕлствине „вырăс варвăрĕсене“ хирĕç вăрçма пулăшнă пекех, вырăс патшин правитĕлствине вăрçă вăрçма пулăшса пынă.

Бољшевиксен партийĕ кăна, патша самодержавине хирĕç, помешчиксемпе капиталиссене хирĕç, империалисăмлă вăрçăна хирĕç татăклăн кĕрешес марксисла позици çинче çирĕп тăрса, ревољуцилĕ интернационалисăмăн аслă йалавне тĕрĕс тытса пынă. Бољшевиксен партийĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çакăн пек установкăна тытса пынă: вăрçăна тăван çĕршыва хÿтĕлес тесе мар пуçланă, йăлтах урăхла, помешчиксемпе капиталиссен интересĕсемшĕн йутçĕршывсем туртса илес, йут халăхсене çаратас тесе пуçланă, çак вăрçа хирĕç рабочисен татăклăн вăрçса пымала.

Рабочи клас бољшевиксен партийĕшĕн тăнă.

Чăнах та, вăрçă пуçланнă вăхăтра интеллигенципе хресченсен кулакла сийне çавăрса илнĕ буржуалă-патриотла сĕрĕм çавăн пекех рабочисен хăшпĕр пайне те пырса тивнĕ. Анчах вĕсем нумайтарăхăшĕ „Союз русского народа“ йатлă хулиганла организацин членĕсем тата чылайĕшĕ есерла-менљшевикла шухăшлă рабочисем пулнă. Вĕсем, паллах, рабочи клас шухăшĕсене палăртса тăман, палăртса тăма та пултарайман. Шăпах çав елементсем ĕнтĕ буржуазин шовинисла манифестацисене хутшăнакансем пулнă, вăл манифестацисене патша правитĕлстви вăрçăн малтанхи кунĕсенче организациленĕ.

2. II Интернационал партийĕсем хăйсен империалисăмлă правитĕлствисем йенне куçни. II Интернационал социал-шовинисла уйрăм партисем çине сапаланса кайни.

II Интернационал оппортунисăмĕ çинчен тата унăн çулпуçĕсем тĕрексĕрри çинчен Ленин пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. II Интернационал çулпуçĕсем сăмахпа кăна вăрçа хирĕç тăни çинчен, вăрçă тухас пулсан, вĕсем хăйсен позицине улăштарса империалисăмлă буржуази йенне тарса каçма, вăрçă майлă тăракансем пулма пултарасси çинчен вăл пĕрмайах каланă. Вăрçăн пирвайхи кунĕсемех ĕнтĕ Ленин малтанах курса тăнине çирĕплетсе панă.

1910 çулта II Интернационалăн Копенгагенра пулнă конгресĕнче социалиссен парламентсенче вăрçă кредичĕсене хирĕç сасăламалла тесе решени йышăннă. Балкан çурутравĕ çинчи вăрçă вăхăтĕнче 1912 çулта II Интернационалăн Базелре пулнă пĕтĕм тĕнчери конгресĕ: пĕтĕм тĕнчери рабочисем капиталиссен усламĕсене пысăклатассишĕн пĕр-пĕрин çине пăшалпа пенине преступлени тесе шутлаççĕ, тесе каланă. Çапла пулнă сăмахпа, резолюцисенче.

Империалисăм вăрçин аслатийĕ аватса йарсан, çав решенисене пурнăçа кĕртмеле пулнă чухне, II Интернационал çулпуçĕсем пролетариата предательсем, изменниксем пулса тăнă, буржуази тарçисем пулса тăнă,—вăрçă майлă тăракансем пулса тăнă.

1914 çулта августăн 4-мĕшĕнче Германи социал-демократийĕ парламентра вăрçă кредичĕсемшĕн, империалисăмлă вăрçăна хута кĕрессишĕн сасăланă. Çавнах тунă Франци, Англи, Бељги тата ытти çĕршывсенчи социалиссен пысăк нумайăшĕ те.

II Интернационал пĕтсе ларнă. Чăннипе вăл пĕр-пĕрне хирĕç вăрçакан социал-шовинисла уйрăм партисем çине сапаланса кайнă.

Социалисла партисен çулпуçĕсем, пролетариата сутса, социал-шовинисăм позицийĕ çине тата империалисăмлă буржуазине хÿтĕлес позици çине куçнă. Вĕсем империалисăмлă правитĕлствăсене рабочи класа улталаса ухмахлатма тата ăна националисăм наркăмăшĕпе чирлеттерме пулăшса пынă. Çак социал-предательсем, тăван çĕршыва хÿтĕлес йалавпа витĕнсе, нимĕç рабочисене—Франци рабочисем çине, Англи рабочисемпе Франци рабочисене — нимĕç рабочисем çине вĕскĕртсе йама тытăннă. II Интернационалăн пысăк мар сахалтарахăшĕ çеç интернационалисла позици çинче йулса йухăма хирĕç пынă, чăнах та, шанчăкпах мар тата татăклăнах та мар, анчах çапах та йухăма хирĕç пынă.

Бољшевиксен партийĕ кăна тÿрех тата пĕр пăркаланмасăр империалисăмлă вăрçăна хирĕç татăклăн кĕрешес йалава çĕкленĕ. Ленин 1914 çулта кĕркунне вăрçă çинчен çырнă тезиссенче II Интернационал сапаланса кайни ăнсăртлăх пулманнине кăтартса панă. II Интернационала оппортуниссем пĕтерсе хунă, вĕсене хирĕç ревољуцилĕ пролетариатăн чи лайăх представителĕсем тахçанах асăрхаттарса пынă.

II Интернационал партийĕсем вăрçăччен те оппортунисăм чирĕпе чирленĕ. Оппортуниссем ревољуцилĕ кĕрешÿрен пăрăнма вĕрентнĕ, „капиталисăм мирлĕ майпа социалисăма ÿссе кĕрессин“ теорине уççăнах вĕрентнĕ. II Интернационал оппортунисăма хирĕç кĕрешесшĕн пулман, унпа мирлĕ пурăнасшăн пулнă тата ăна çирĕпленме панă. Оппортунисăм тĕлĕшпе килĕштерсе пырас политикăна тытса пырса, II Интернационал хăй те оппортунисла Интернационал пулса тăнă.

Империалисăмлă буржуази колонисенчен, кайа йулнă çĕршывсене експлоатациленинчен илнĕ хăйĕн усламĕсем шучĕпе ĕçукçине чылай нумайрах тÿлесе тата ытти подачкăсем парса, квалификациллĕ рабочисен çÿлти пайне, рабочи аристократи текенскерне, тăтăшах хăй майлă çавăрса пынă. Рабочисен çав сийĕнчен профсойузсен тата кооперативсен сахал мар руководителĕсем, муниципалитетсемпе парламентсен депутачĕсем, пичет тата социал-демократла организацисен работникĕсем тухнă. Вăрçă вăхăтĕнче çав çынсем, хăйсен положенине çухатасран хăраса ревољуци противникĕсем пулса тăнă, хăйсен буржуазине, хăйсен империалисăмлă правитĕлствисене чи хыттăн хÿтĕлекенсем пулса тăнă.

Оппортуниссем — социал-шовиниссем пулса тăнă.

Социал-шовиниссем, вăл шутра вырăс менљшевикĕсемпе есерĕсем те, çĕршыв ăшĕнчи рабочисемпе буржуазин класлă мирне тăвасси çинчен тата хăйсен çĕршывĕн тулашĕнче ытти халăхсене хирĕç вăрçасси çинчен вĕрентнĕ. Вĕсем вăрçă пынишĕн хăйсен çĕршывĕн буржуазине айăплă мар тесе, вăрçăшăн чăннипех кам айăплă пулнине массăсенчен пытарнă. Социал-шовиниссем нумайĕшĕ хăйсен çĕршывĕн империалисăмлă правитĕлствисен министрĕсем пулса тăнă.

Вăрттăн кĕрешекен социал-шовиниссем те, центриссем текенскерсем, пролетариат ĕçĕшĕн унтан сахал мар хăрушă пулса тăнă. Центриссем—Каућкий, Троцкий, Мартăв тата ыттисем те уççăн кĕрешекен социал-шовиниссене тĕрĕсе кăларма хăтланнă тата хÿтĕлесе пынă, апла пулсан, вĕсем хăйсем рабочи класа улталанине вăрçа хирĕç кĕрешесси çинчен „сулахай“ сăмахсем каланипе витсе, социал-шовиниссемпе пĕрле пролетариата сутнă. Чăннипе центриссем вăрçăшăн тăнă, мĕншĕн тесен вĕсем вăрçă кредичĕсене хирĕç сасăламала мар тесе, вăрçă кредичĕсем çинчен сасăланă чухне сасăламасăр тытăнса тăнипех çителĕклĕ тесе сĕнни,—вăрçăшăн тăнине кăтартса панă. Вĕсем те, социал-шовиниссем пекех, хăйсен империалисăмлă правитĕлствине вăрçă туса пыма чăрмантарас мар тесе, вăрçă вăхăтĕнче класлă кĕрешÿве пăрахма хушнă. Центрис Троцкий вăрçăн тата социалисăмăн пур чи кирлĕ ыйтăвĕсем тăрăх та Ленина хирĕç, бољшевиксен партине хирĕç тăнă.

Вăрçă пуçланнă вăхăтри пирвайхи кунсенчех Ленин çĕнĕ III Интернационала тума вăйсем пухма тытăннă. Бољшевиксен партин Тĕпкомĕ 1914 çулти нойабĕрте вăрçа хирĕç кăларнă манифесрах та ĕнтĕ намăслăн пĕтсе ларнă II Интернационал вырăнне III Интер национал тăвас задачăна лартнă.

1915 çулти феврањ уйăхĕнч Лондăнра Антантă çĕршывĕсенч социалиссен конференцинче Лени хушнă тăрăх Литвинăв йулта тухса каланă. Литвинăв социал сене (Вандервељде, Самба, Г Бељгири тата Францири бурж лă правитĕлствăсенчен тухма и периалиссемпе çыхăнса тăрасс пĕтĕмпех пĕтерсе лартма, вĕсем пĕрле ĕçлессине пăрахма хуш Вăл пур социалиссенчен те хă сен империалисăмлă правитĕлстві сене хирĕç татăклăн кĕрешме та вăрçă кредичĕсемшĕн сасăлани сивлеме ыйтнă. Анчах Литвин сасси çак конференцире пĕр-пĕ чен илтĕннĕ.

1915 çулта çенҭабĕрĕн пуçлам шĕнче Циммервањдре интернацио налиссен пĕрремĕш конференций пухăннă. Ленин çак конфере цине вăрçа хирĕçле интернаци нањнай йухăмăн аталанăвĕнч „пирвайхи утăм“ тесе каланă. Л нин çак конференцире Циммерва дри сулахай группăна туса ху Анчах çав Циммервањдри сулах группăра Ленин пуç пулса йерт пыракан бољшевиксен партийĕ к на вăрçа хирĕç пĕртен-пĕр тĕр тата вĕçне çитийех çирĕп пози тытса пынă. Циммервањдри с лахай группă нимĕç чĕлхи „Предвестник“ йатлă журнал к ларса тăнă, унта Ленин стаҭйис пичетленсе пынă.

1916 çулта Швейцарири Кин йатлă йалта интернационали иккĕмĕш конференцине пухма килнĕ. Ана иккĕмĕш Циммерва конференци, теççĕ. Ку вăхăт не пур çĕршывсенче те пекех тернационалиссен группăсем рăлнă, интернационалисла еле сем социал-шовиниссенчен рăлса тăни уççăнрах палăр кирли тата — массăсем ку вăхăт тĕлне вăрçă та вăл тунă хĕн-ху не пула сулахайланнă. Ки манифеса конференцире рипе кĕрешнĕ тĕрлĕ гру килĕшÿ тунине пула туса ленĕ. В Циммервањдри фести лаштарсан, малала туни пу а.

Анчах Кинтањри конф те бољшевиксен политики положенийĕсене: империали вăрçăна граждан вăрçи ту рассине, вăрçăра хăйсен им лисăмлă правитĕлствисене тармала тăвассине, III Интер онала организацилессине йы ман. Çапах та Кинтањри ко ренци интернационалисла еле сене уйăрăлса тухма пулăшнă йарахпа вĕсенчен Коммуни Интернационал пулса тăнă.

Ленин социал-демократсем шинчи вĕçне çитийех интер налис пулайманнисен, Розă сембург, Карл Либкнехт пек тернационалиссен йăнăшĕсене тикленĕ, анчах çав вăхăтрах в не тĕрĕс позици çине тăма лăшса пынă.

3. Бољшевиксен партин вăрçă, мир тата ревољуци ыйт вĕсем тĕлĕшĕнчи теорипе тактики.

Бољшевиксем мир тăвасшăн хуйхăракан тата мир тăвас пирки пропагандă тунипех чарăнса тăракан сулахай социал-демократсен нумайтарахăшĕ пек ахањ пацифиссем (мир сторонникĕсем) пулман. Бољшевиксем мир тăвассишĕн вăрçăлă империалисăмлă буржуазин влаçне сирпĕтсе антарасси патне çитиччен активлă ревољуцилĕ кĕрешсе пырассишĕн тăнă. Бољшевиксем, вăрçа пĕтермели тата йĕркелĕ мир, аннексисемсĕр тата контрибуцисемсĕр мир çĕнсе илмели пуринчен шанчăклăрах май вăл—империалисăмлă буржуазин влаçне сирпĕтсе антарни пулса тăраҭ тесе шутласа,—мир ĕçне пролетарилĕ ревољуци çĕнтерес ĕçпе çыхăнтарнă.

Ревољуцирен менљшевикла-есерла пăрăннине хирĕç тата вăрçă вăхăтĕнче „граждăнла мире“ сыхламала текен предательле лозунга хирĕç—бољшевиксем „империалисăмлă вăрçăна граждăн вăрçи туса йарас“ лозунг кăларса тăратнă. Çак лозунг, ĕççыннисем, вăл шутрах салтак шинелĕсем тăхăнтарнă хĕçпăшаллă рабочисемпе хресченсем, вĕсем вăрçăран хăтăласшăн тата йĕркелĕ мир тăвасшăн пулсан, хĕçпăшалсене хăйсен буржуазине хирĕç çавăрса унăн влаçне сирпĕтсе антармалине пĕлтернĕ.

Буржуалă тăван çĕршыва сыхлас текен менљшевикла-есерла политикăна хирĕç—бољшевиксем „империалисăмлă вăрçăра хăйсен правитĕлствине парăнтармала тăвас“ политикă кăларса тăратнă. Çак вăл—вăрçă кредичĕсене хирĕç сасăламалине, çарта ревољуцилĕ вăрттăн организацисем туса пымалине, фронтра салтаксем тăванлашассине пулăшмалине тата рабочисемпе хресченсен вăрçа хирĕçле ревољуцилĕ выступленийĕсене организацилемелине, çав выступленисене хăйсен империалисăмлă правитĕлствисене хирĕç восстани туса йамалине пĕлтернĕ.

Бољшевиксем çапла шутланă: империалисăмлă вăрçăра патша правитĕлстви парăнни халăхшăн чи пĕчĕкрех инкек пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен çав парăну халăх патша йĕркине çĕнтерессине тата рабочи клас капиталисăмлă чуралăхпа империалисăмлă вăрçăсенчен хăтăлассишĕн ăнăçлăн кĕрешессине çăмăллатнă пулĕччĕ. Çавăнпа пĕрлех Ленин çапла шутланă: хăйсен империалисăмлă правитĕлствисене парăнтармала тăвас политикăна вырăс ревољуционерĕсем кăна мар, вăрçă вăрçакан мĕнпур çĕршывсенчи рабочи класăн ревољуцилĕ партийĕсем те ĕçе кĕртсе пымала.

Бољшевиксем кирек мĕнле вăрçа та хирĕç пулман. Вĕсем йут çĕршывсене туртса илессишĕн пыракан вăрçа хирĕç çеç, империалисăмлă вăрçа хирĕç çеç пулнă. Бољшевиксем—икĕ йышши вăрçă пулаҭ, тесе шутланă:

а) йĕркелĕ вăрçă, йут çĕршывсене туртса илессишĕн мар пыракан вăрçă, ирĕке тухассишĕн, йе халăха хăйне тулаш йенчен тапăннинчен тата ăна пусмăрлама хăтланнисенчен хÿтлес, йе халăха капиталисăм чуралăхĕнчен хăтарас, йе, йулашкинчен, колонисене тата пăхăнса тăракан çĕршывсене империалисăм пусмăрĕнчен хăтар тĕллевпе пыракан вăрçă, тата

б) йĕркелĕ мар вăрçă, йут çĕ шывсене, йут халăхсене турт илес, пусмăрласа усрамала тăв тĕллевпе пыракан вăрçă.

Бољшевиксем пĕрремĕш йыш вăрçă хутне кĕнĕ. Иккĕмĕш йы ши вăрçă тĕлĕшпе вара, бољш виксем ăна хирĕç ревољуци тăв таранах тата хăйсен империал сăмлă правитĕлствисене сирпĕт антарас таранах татăклă кĕреш туса пыма кирлĕ тесе шутланă.

Пĕтĕм тĕнчери рабочи класш Ленинăн вăрçă вăхăтĕнче çыр теорилĕ ĕçĕсем калама çук пы вырăн йышăнса тăнă. 1916 çу çуркунне Ленин „Империали как высшая стадия капитализм йатлă кĕнеке çырнă. Çак кĕнеке Ленин: имериалисăм вăл—капит лисăмăн чи çÿлти сыпăкĕ пул тăнине, империалисăм ĕнтĕ „про рессивлă“ капиталисăмран хара пырла капиталисăм, çĕрсе пырак капиталисăм пулса тăма ĕлкĕрн не, империалисăм—вилсе пырак капиталисăм пулса тăнине кăтар са панă. Çакă вăл, паллах, кă талисăм хăйех, пролетарилĕ ревољ цисĕрех, вилсе пĕтессине, в хăйех тымартах çĕрсе кайасс пĕлтермен. Ленин йаланах: рабо клас ревољуцийĕсĕр капиталис ма сирпĕтсе антарма май çук, т се вĕрентнĕ. Çавăнпа та, импер лисăм вилсе пыракан капиталис пулса тăнине палăртса, Ленин ç вăнпа пĕрлех çак кĕнекере „им риалисăм вăл—пролетариатăн с

Малалли 3-мĕш страницăра

МАЛАЛИ.

циальнӑй револђуци умӗнхи вӑхӑт" пулса тӑнине кӑтартса пачӗ.

Ленин ҫапла кӑтартса пачӗ: империализм епохинче капитализмӑн пусмӑр ытларах та ытларах вӑйланса пырать, империализм условисенче капитализм тӗрекӗсене хирӗҫ пролетариат тархасси ӳссе пырать, капитализмла ҫӗршывсен ӑшӗнче револђуци сиксе тухассин елеменчӗсем ӳссе ҫитӗнсе пыраҫҫӗ.

Ленин ҫапла кӑтартса пачӗ: империализм епохинче колонисенче тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенче револђуцилӗ кризис ҫивӗчленсе пырать, империализма хирӗҫ тархӑнин елеменчӗсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ, империализма хирӗҫ ирӗке тухассишӗн тӑвакан вӑрҫӑ елеменчӗсем ӳссе ҫитенеҫҫӗ.

Ленин ҫапла кӑтартса пачӗ: империализм условийӗсенче капитализмӑн хирӗҫӳвӗсем тата пӗр пек виҫепе мар аталанасси уйрӑмах ҫивӗчленсе ҫитӗ, таварсене сутмали рынӑксемшӗн тата капитала йут ҫӗршыва турттарса тухассишӗн пыракан кӗрешӳ, колонисемшӗн, чӗртавар тупмали вырӑнсемшӗн пыракан кӗрешӳ тӗнчене ҫӗнӗрен пайласа валеҫессишӗн вӑхӑтран вӑхӑтах пулакан империализмла вӑрҫӑсем пурпӗрех пулмалла тӑвать.

Ленин ҫапла кӑтартса пачӗ: шӑпах капитализмӑн ҫав пӗр пек виҫепе мар аталанӑвне пула империализмла вӑрҫӑсем пулса пыраҫҫӗ, ҫав вӑрҫӑсем империализмӑн вӑйӗсене хавшатаҫҫӗ, вӗсем империализм фронтне ӑҫта пуриччен ытларах хавшаса ҫитнӗ, ҫавӑнта вӑл фронта татма пултармала тӑваҫҫӗ.

Ҫаксене пурне те шута илсе, Ленин ҫакӑн пек вывод тунӑ: пролетариат империализм фронтне ӑҫтан та пулсан пӗр вырӑнтан йе темиҫе вырӑнтан татасси питех те пулма пултарать, социализм малтанлӑха темиҫе ҫӗршывра йе тата пӗр ҫӗршывра, уйрӑмӑн илсен ҫӗршывра ҫӗнтерме пултарать, пур ҫӗршывсенче те, вӗсенче капитализм пӗр пек виҫепе аталанман пирки, социализм пӗр вӑхӑтрах ҫӗнтересси—пулма пултараймасть, социализм малтанлӑха пӗр ҫӗршывра йе темиҫе ҫӗршывра ҫӗнтерет, ытти ҫӗршывсем вара хашпӗр вӑхӑта буржуйла ҫӗршывсемех пулса йулаҫҫӗ.

Акӑ Ленин империализмла вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнӑ икӗ тӗрлӗ статйисенче пачӗ, ҫав гениле выводӑн формулировкине:

1) „Экономикӑлла тата политикӑлла аталану пӗр пек виҫепе пулса пыманни капитализмӑн ним иккӗленмелле мар саккунӗ пулса тӑрать. Ҫакӑнтан вара—социализм малтанлӑха нумай мар йе пӗр ҫӗршывра, уйрӑмӑн илнӗ, капитализмла ҫӗршывра ҫӗнтерме пултарать. Ҫак ҫӗршывӑн ҫӗнтернӗ пролетариачӗ капиталиссене експроприациленӗ тата хай патӗнче социализмла производства организацилесе, ытти ҫӗршывсенчи пусмӑрта пурӑнакан классене хайӗн патне йавӑҫтарса, ытти, капитализмла тӗнчене хирӗҫ тӑна пулӗччӗ"...(1915 ҫулти августра ҫырнӑ „О лозунге Соединенных Штатов Европы" йатлӑ статйаран) (Ленин, т. XVIII, стр. 232—233).

2) „Капитализм аталанӑвӗ тӗрлӗ ҫӗршывсенче ҫав тери пӗр пек виҫепе мар пулса пырать. Таварлӑ производство вӑхӑтӗнче урахла пулма та пултараймасть. Ҫакӑнтан акӑ мӗнле ҫирӗп вывод тухса тӑрать: социализм пӗр вӑхӑтрах пур ҫӗршывсенче те ҫӗнтерме пултараймасть. Вӑл малтанлӑха пӗр ҫӗршывра йе темиҫе ҫӗршывра ҫӗнтерет, ыттисем вара хашпӗр вӑхӑта буржуйла йе буржуйла йӗрке пуличченхи ҫӗршывсемех пулса йулаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл хирӗҫӳсене кӑна мар, тата ытти ҫӗршывсенчи буржуази социализмла государствӑн ҫӗнтерӳлӗ пролетариатне ҫӗмӗрсе тӑкма тӳррӗмӗнех тӑрӑшассине пусӑрлса йамалла. Ҫавӑн пек чухне пирӗн йенчен вӑрҫӑ вӑрҫни—саккунлӑ тата йӗркелӗ вӑрҫӑ пулнӑ пулӗччӗ. Вӑл социализмшӑн, ытти халӑхсене буржуазирен хӑтарассишӗн пыракан вӑрҫӑ пулнӑ пулӗччӗ" (1916 ҫулта кӗркунне ҫырнӑ „Военная программа пролетарской революции" йатлӑ статйаран) (Ленин, т. XIX, стр. 325)

Ҫакӑ вӑл социализмла револђуцин ҫӗнӗ, вӗҫленсе ҫитнӗ теорийӗ, социализмӑн уйрӑм ҫӗршывсенче ҫӗнтерме пултарасси ҫинчен, вӑл ҫӗнтермели условисем ҫинчен, вӑл ҫӗнтермели малашлӑхсем ҫинчен калакан теори пулнӑ, ҫав теорин никӗсӗсене Ленин 1905 ҫултах ӗнтӗ „Две тактики социал-демократии в демократической революции" йатлӑ брошӑрӑра палӑртса хунӑ.

Ҫав теори империализм чухнехи капитализм тапхӑрӗнче марксиссем хушшинче сарӑлнӑ ҫирӗп установкӑран тӗпренех уйӑрӑлса тӑнӑ, ун чухне марксиссем социализм пӗр-пӗр уйрӑм ҫӗршывра ҫӗнтерме пултараймасть, социализм ҫӗнтересси мӗнпур цивилизацилӗ ҫӗршывсенче те пӗр вӑхӑтрах пулса иртет, тесе шутланӑ. Ленин, хайӗн „Империализм, как высшая стадия капитализма" йатлӑ пит паха кӗнекинче империализмла капитализм ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ данӑйсене тӗпӗх, ҫав кивелсе кайнӑ установкӑна тепӗр йенне ҫавӑрса хунӑ та, теорилӗ ҫӗнӗ установка панӑ, ҫав установка—социализм пур ҫӗршывсенче те пӗр вӑхӑтрах ҫӗнтерме пултараймасть тесе шутланӑ, социализм пӗр ҫӗршывра, уйрӑмӑн илнӗ капитализмла ҫӗршывра ҫӗнтерме пултарать тесе йышӑннӑ.

Социализмла револђуцин ленинла теорийӗн питӗ паха пӗлтерӗшӗ вӑл марксизма ҫӗнӗ теорипе пуйанлатнинче тата ӑна малала йанинче кӑна мар пулса тӑрать. Унӑн пӗлтерӗшӗ тата ҫакӑнта пулать: вӑл уйрӑм ҫӗршывсенчи пролетарисене револђуцилӗ малашлӑх парать, вӗсем хайсен, нацилӗ, буржуазине хытӑрах хӗссе пырас ӗҫре вӗсен пуҫарулӑхне вӑйлатса йарать, вӗсене ҫӗнтерӳ шанчӑкне ҫирӗп шанма вӗрентет, вӗсене ҫавнашкал хӗссе пырассине организацилемешкӗн вӑрҫӑлла лару-тӑрупа усӑ курма вӗрентет тата вӗсем пролетарилӗ револђуци ҫӗнтерессине шанса тӑрассине ҫирӗплетет.

Ҫапла пулнӑ болђшевиксен вӑрҫӑ, мир тата револђуци ыйтӑвӗсем тӗлӗшӗнчи теорилӗ тата тактикӑлла установки.

Ҫак установка тӑрах болђшевиксем хайсен Российӑри практикӑлла ӗҫне туса пынӑ.

Полици хайарран хӗсӗрленине пӑхмасӑрах, думӑ депутачӗсем—Бадайӗв, Петровский, Муранӗв, Самойлӑв, Шагӑв болђшевиксем вӑрҫӑ пуҫлансанах чылай организацисене ҫӳресе болђшевиксем вӑрҫӑпа револђуци ҫине мӗнле пӑхни ҫинчен докладсем туса панӑ. 1914 ҫулти нойабӗрте вӑрҫӑ ҫине мӗнле пӑхасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе-йавма Государственнӑй думӑри болђшевика фракцин канашлӑвне пуҫтарма тӗвнӗ. Виҫҫӗмӗш кунӗнче ҫав заседание тӗпӗмпех арестленӗ. Суд депутатсене пурне те правасемпе хӑварса тата Хӗвелтухӑҫ Ҫӗпӗре ссылкӑна йамалла тунӑ. Патша правительстви Государственнӑй думӑри болђшевика депутачӗсене „государствӑлла изменӑшӑн" айӑпланӑ.

Судра думӑ депутачӗсен ӗҫӗсем пит лайӑх курӑннӑ, ҫав ӗҫсем пирӗн партине чыс тунӑ. Болђшевик-депутатсем патша суччӗ умӗнче хайсене хайулӑ та ҫирӗп тытнӑ, вӗсем суда патша йӗркин йут ҫӗршывсене туртса илес политикине тӑрӑ шыв ҫине кӑлармали трибуна туса хунӑ.

Ҫав ӗҫпе суд умне тӑратнӑ Каменӗв хайне урахла тытканӑ. Хай хӑравҫӑ пулнипе вӑл пирвайхи хӑрушлӑх ҫитсенех болђшевиксен партин политикине йышӑнмасӑр пӑрахӑҫ тунӑ. Каменӗв судра вӑрҫӑ ҫине пӑхас енӗ ытти тӑрах вӑл хӑй болђшевиксемпе килӗшменни ҫинчен каланӑ, ҫавна ҫирӗплетсе пама Иорданский меньшевика свидетеле чӗнме ыйтнӑ.

Болђшевиксем вӑрҫӑ ӗҫне пулӑшса тӑракан военно-промышленнӑй комитетсене хирӗҫ, меньшевиксем рабочисене империализмла буржуазин влийанине пӑхӑнтарма хӑтланнине хирӗҫ пысӑк ӗҫсем туса иртернӗ. Буржуази империализмла вӑрҫӑна пурин умӗнче те пӗтӗм халӑх вӑрҫийӗ пек кӑтартассипе питех те интересленнӗ. Буржуази вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, хайӗн пӗтӗм Российӑри организацийӗсене—земствӑсемпе хуласен союзӗсене туса, государства ӗҫӗсем ҫине пысӑк влийанӗ пама пултарнӑ. Буржуазишӗн ҫавнашкалах рабочисене те хайӗн руководствине тата хайӗн влийанине пӑхӑнтарни кирлӗ пулнӑ. Буржуази ҫавна тума военно-промышленнӑй комитетсем ҫумӗнче „рабочисен групписем" тӑвассине шухӑшласа кӑларнӑ. Меньшевиксем буржуазин ҫав идейине йарса илсе пулӑшнӑ. Буржуазине ҫав военно-промышленнӑй комитетсене рабочисен представителӗсене хутшӑнтарни усӑллӑ пулнӑ, вӑл представителӗсем рабочисен массисем хушшинче снарйадсем, тупӑсем, пӑшалсем, патронсем тӑвакан тата вӑрҫӑ валли ӗҫлекен ытти хапрӑксемпе савӑтсенче ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлатма кирли ҫинчен агитаци тумала пулнӑ. „Пурте вӑрҫа валђҫи, пурте вӑрҫа"—ҫапла пулнӑ буржуази лозунгӗ. Чӑннипе ҫав лозунг „вӑрҫа валђҫи апаласем тӑратнинчен тата йут ҫӗрсене туртса илничен мӗн май таран пуйса пыр" тенине пӗлтернӗ. Меньшевиксем буржуази пуҫарӑва йанӑ ҫав суйа-патриота ӗҫе тимлӗн хутшӑнса ӗҫленӗ. Капиталиссене пулӑшса, вӗсем военно-промышленнӑй комитетсем ҫумӗнчи „рабочисен групписене" хутшӑнма рабочисене хытӑ агитацилене. Болђшевиксем ҫав суйа-патриотла ӗҫе хирӗҫ пулнӑ. Вӗсем военно-промышленнӑй комитетсене бойкот тӑвассишӗн пулнӑ, ҫав бойкота ӑнӑҫлӑн туса иртернӗ. Анчах рабочисен пӗр пайӗ паллӑ меньшевик Гвоздӗв тата провокатӑр Абросимӑв йертсе пынипе ҫапах та военно-промышленнӑй комитетсен ӗҫне хутшӑннӑ. Рабочисенчен уйӑрнӑ уполномоченнӑйсем 1915 ҫулти ҫентйабӗр уйӑхӗнче военно-промышленнӑй комитетсем ҫумӗнчи „рабочисен групписене" тӑтӑкланах суйлама пухӑнсан уполномоченнӑйсен нумайӑшӗ ҫав группӑсене кӗрессине хирӗҫ пулни курӑннӑ. Рабочисен представителӗсен нумайӑшӗ вӑйлӑ рабочисем хайсен умне—миршӑн кӗрешес, патша йӗркине сирӗпсе антарассишӗн кӗрешес—задачӑна лартаҫҫӗ тесе, военно-промышленнӑй комитетсене кӗрессине хирӗҫ хыттӑн калакан резолюци йышӑннӑ.

Болђшевиксем ҫавнашкалах тата ҫарпа флотра пысӑк ӗҫ сарса йанӑ. Вӗсем салтаксемпе матроссене массисене вӑрҫӑн ниҫҫӑн илтмен тискерлӗхӗсемшӗн тата халӑх асап тӳснишӗн кам айӑпли ӑнлантарса панӑ, револђуци халӑхшӑн империализмла вӑрҫӑран хӑтӑлмали пӗртен-пӗр ҫул пулса тӑнине ӑнлантарса панӑ. Болђшевиксем ҫарта тата флотра, фронтра тата тылри чаҫсенче йачейкӑсем туса пынӑ та вӑрҫа хирӗҫ чӗнекен листовкӑсем сарнӑ.

Кронштадтра болђшевиксем „Кронштадтри ҫар организацин Тӗп коллективне" тунӑ, вӑл партин Петроградри комитечӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑнӑ. Партин Петроградри комитечӗ ҫумӗнче гарнизонра ӗҫлемӗ ҫарти организаци тунӑ пулнӑ. 1916 ҫулти август уйӑхӗнче Петроград охранкин начальникӗ ҫапла пӗлтернӗ: „Кронштадтри коллективра ӗҫе пит тӗплӗн, вӑрттӑн туса пыраҫҫӗ, унта тӑракансем—пурте шарламасӑр тата асӑрханса ӗҫлекен ҫынсем. Ҫак коллективӑн ҫыран тӑн хӗррипче те представителӗсем пур".

Парти вӑрҫакан ҫарсен салтакӗсем пӗр-пӗрине тӑванлашассишӗн фронтра агитаци тунӑ, агитаци тунӑ чухне, тӑшман—вӑл пӗтӗм тӗнче буржуазийӗ пулса тӑнине тата империализмла вӑрҫӑна граждан вӑрҫи туса йарсан кӑна, хӗсӗпшала хайсен харпӑрхӑй буржуазине тата унӑн правительствине хирӗҫ ҫавӑрсан кӑна вӑрҫа пӗтерме пуласчине уйрӑмах палла тунӑ. Уйрӑм ҫар чаҫӗсем наступление кайассине хирӗҫ тӑнисем час-часах пулма пуҫланӑ. Кунашкал фактсем 1915 ҫултах ӗнтӗ тата уйрӑмах 1916 ҫулта пулса иртнӗ.

Болђшевиксем Прибалтика районӗнчи ҫурҫӗр фронтри ҫарсенче уйрӑмах пысӑк ӗҫсем туса пынӑ. Ҫурҫӗр фронтри ҫарӑн главнокомандуйушчийӗ генерал Рузский 1917 ҫулӑн пуҫламӗшӗнче начальствӑсене болђшевиксем ҫав фронтра пит пысӑк револђуцилӗ ӗҫ сарса йани ҫинчен пӗлтернӗ.

Вӑрҫӑ халӑхсен пурнӑҫӗнчи, пӗтӗм тӗнчери рабочи класӑн пурнӑҫӗнчи калама ҫук пысӑк улшӑну пулнӑ. Вӑл государствӑсен кунҫулӗсене, халӑхсен кунҫулӗсене, социализмла йухӑмӑн кунҫулӗсене пурнӑҫ ӗҫ пӗтес ыйту умне лартнӑ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ вӑл унпа пӗрлех хайсене социализм текен мӗнпур партисемпе йухӑмсене испытани тытмали, тӗрӗслесе пӑхмали вӑхӑт пулнӑ. Унчухне ыйту ҫапла тӑнӑ: ҫав партисемпе йухӑмсем социализм ӗҫӗшӗн, интернационализм ӗҫӗшӗн тӗрӗссӗн кӗрешсе пыраҫ-и, йе рабочи класа сутаҫҫӗ-и, хайсен йалавӗсене чӗркесе хурса, вӗсене хайсен нацилӗ буржуази ури патне пуҫтарса хумалла хурӗҫ-и.

Вӑрҫӑ II Интернационалӑн партийӗсем испытани тытайманнине, рабочи класа сутнине тата хайсен йалавӗсене хайсен нацилӗ, империализмла буржуази умӗнче тайӑнине кӑтартса панӑ.

Ҫав партисем, хайсем хушшинче оппортунизма пӑхса ӳстерекскерсем тата оппортунизмпе национализма устунакан тунп ҫичен вӗренсе пынӑскерсем, урахла туна та пултарайман.

Вӑрҫӑ ҫакна кӑтартса панӑ: болђшевиксен партийӗ испытание чыслӑн тытнӑ тата социализм ӗҫне, пролетарилӗ интернационализм ӗҫне вӗҫне ҫитийех тӗрӗс туса пыракан пӗртен-пӗр парти пулнӑ.

Ӑна ӑнланмалла та ӗнтӗ: ҫӗнӗ сӑнарлӑ парти кӑна, оппортунизмпа хирӗҫ пӗр килӗшмесӗр кӗрешсе ӳсӗшӗнна вӗрентсе ӳстернӗ парти кӑна, оппортунизмран тасалнӑ парти кӑна—ҫавнашкал парти кӑна аслӑ испытание тытма тата рабочи класс ӗҫне, социализма ӗҫне интернационализм ӗҫне тӗрӗс туса пыма пултарнӑ.

Болђшевиксен партийӗ шӑпах ҫавнашкал ...

(ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗн малали „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатӑн ҫитес номӗрӗсенче пичетленет).

Л. М. Каганович йулташ сӑмахӗ

„Родина" самолђот екипажне кӗтсе илнӗ чухне пулнӑ митингра 1938 ҫулти октйабӗрӗн 27-мӗшӗнче каланӑ

— Хаклӑ йулташсем — Валентина Гризодубӑва, Полина Осипенко тата Марина Раскова! Сире, хайулла та ҫирӗп героинђасене, социализмла тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ хӗрӗсене, пирӗн чаплӑ авиаци историне ҫӗнӗрен геройла страницӑсем ҫырса хунӑскерсене, Ленин—Сталин партийӗн Тӗп Комитечӗпе Совет Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнчен болђшевикла хӗрӳлӗ салам калатӑп. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Болђшевиксен партин Тӗп Комитечӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ сире, сирӗнпе пӗрле пӗтӗм совет халӑхне Мускаврӑн Инҫет-Хӗвелтухӑҫне пӗр лармасӑр вӗҫсе тухассине ӑнӑҫлӑн, чаплӑн вӗҫленӗ йатпа ырӑ сунса саламлаҫҫӗ.

Пӗтӗм ҫӗршыв, рабочисем, служащисем, хресченсем, интеллигенци, пирӗн мухтавлӑ ҫамрӑксем тата уйрӑмах хӗрарӑмсем сирӗн геройла ӗҫе тата Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи сире пулӑшу пана хамӑрӑн лђотчиксен ӗҫӗсене пысӑк тимлӗхпе сӑнаса пычӗҫ.

Есӗр, Гризодубӑва, Осипенко тата Раскова йулташсем, Кербирен Сталин йулташ патне йанӑ хӑварӑн телеграммӑра: шурлӑхсен, сопкӑсем хушшинче, инҫетри тайгара есӗр тӑр пӗччен пулман, сирӗнпе пӗрле—нумай мӗлйунлӑ мӗнпур халӑх, пӗтӗм парти тата пирӗн аслӑ та йуратнӑ тӑван атте тата тус Сталин йулташ пулнӑ, тесе пит тӗрӗс ҫырнӑ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Шӑпах ҫавӑнпа ӗнтӗ есӗр тата сирӗн тӑванусем, пирӗн мӗнпур халӑх, Тӗп Комитет тата правительство сирӗн ӗҫ ӑнӑҫлӑн пуласси ҫине ҫирӗппӗн шанса тӑнӑ.

Партипе унӑн Тӗп Комитечӗ, правительство „Родина" самолђот ҫинче есӗр инҫете вӗҫнине пысӑк вырӑна хунӑ, халӗ те ҫапла пысӑк вырӑна хураҫҫӗ тата есӗр тунӑ ҫӗнтерӳсене чаплӑ результатсене пысӑк хака хураҫҫӗ.

Йулташсем! Пирӗн йумахри пек паттӑр лђотчицӑсем маршрут тӑрӑх 6.450 километр, тӳррӗн илсен—6 пин километра йахӑн 26 сехет те 29 минут хушшинче вӗҫсе тухнӑ. Ку вӑл инҫете вӗҫес тӗлӗшпе Франци лђотчици кунччен малтан тунӑ хӗрарӑмсен пӗтӗм тӗнчери рекордӗнчен 1.500 километр ытларах пулать.

Пирӗн героинђа-лђотчицӑсем, Партипе правительства заданине пурнӑҫа кӗртме, совет авиацин ӗҫне малала йама, халӑх тата халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ыранине тивӗҫлӗ пулма, хайсен паттӑр ӗҫӗпе хамӑрӑн социализмла аслӑ ҫӗршыва,—вӗсен чаплӑ самолђочӗ унӑн йатне панӑ,—чапа кӑларма тӗтрепе пӗлӗтсем хушшипе, вӑрмансемпе сӑртсен ҫийӗпе, шывсем тата тайга ҫийӗпе вӗҫсе иртнӗ.

Авиаци ҫакӑн пек вӗҫевӗсене пирӗн ҫӗршывра пирвайхи хут мар тӑваҫҫӗ. Пирӗн йуратнӑ лђотчиксем хайсен геройла ӗҫӗсем ҫинчен хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн кӗрешӳ историне мухтавлӑ страницӑсем сахал мар ҫырса хунӑ. Сурҫӗр полюсӗ урлӑ вӗҫсе каснӑ Чкалӑв, Байдуков, Беляков, Громӑв, Йумашӗв, Данилин вӗҫевӗсем, арктика рейсӗсен чаплӑ маҫтӑрӗсем—Молӑкӑвпа Водопйанӑвӑн вӗҫевӗсем, Мускав—Инҫет-Хӗвелтухӑҫ районӗ хушшине вӗҫсе тухса рекорд тунӑ Владимир Коккинакин чаплӑ маҫтӑрлӑхӗ, пирӗн мухтавлӑ авиацинчи геройсем тунӑ тата ытти нумай пысӑк ҫитӗнӳсем, мухтавлӑ папанинцӑсен геройлӑхӗ—ҫаксем пурте пирӗн ҫӗршывра ӑслӑ ҫынсен кулђтури ӳснине, пирӗн материаллӑ-техникӑлла кулђтури ӳснине тата пӗтӗм авиаци промышленноҫӗ ӳснине ӳссӑн кӑтартса тӑраҫҫӗ.

Вӗҫӗ героинђасем вӗҫевӗ чи геройла вӗҫевсен хисепне кӗрӗ. Анчах, йулташсем, вӑл вӗҫевӗн хайӗн уйрӑмлӑхӗсем, хайӗн хакӑлӗ пур. Ҫак вӗҫевӗ уйрӑмах хакли ҫакӑнта: ку вӗҫев хӗрарӑм-героинђасен ҫичӗ пӗррӗмӗш авиацилӗ рекорд пулнинче. Хӗрарӑм ҫинчен Ленин ҫапла ҫырнӑ:

„Цивилизацилӗ ҫӗршывсенче пуринче те, чи малта пыракан пулсан та пулин, хӗрарӑмсен пурнӑҫӗ ҫакӑн пек: ахаль мар ӗнтӗ вӗсене пӳрт-суртри чурасем тесе калаҫҫӗ".

Капитализм чухне, уйрӑмах феодализмла варварлӑх ҫӗршывсенче хӗрарӑм чи нимне тӑман чӗр-чун вырӑнне пурӑнать.

Пирӗн социализмла ҫӗршывра пачах урахла. Октйаберти социализмла револђуци, Сталинла Конституци хӗрарӑма пӗртан правалӑ туса хучӗҫ тата пирӗн хӗрарӑмсене хайсен творчествӑлла вӑйӗсене чечеклентерме майсем туса пачӗҫ. Партин 17-мӗш съездӗнче тунӑ хайӗн отчечӗнче Сталин йулташ совет хӗрарӑмӗсем общественнӑй активлӑхӗ ӳсни ҫинчен каласа пачӗ. Сталин йулташ ҫапла каларӗ:

„...Хӗрарӑмсем пирӗн ҫӗршывра халӑх йышӗн ҫурри пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем калама ҫук пысӑк ӗҫ ҫарӗ пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем пирӗн ача-пӑчасене, пирӗн пулас ӑрӑва, урахла каласан, пирӗн малашлӑха пӑхса ӳстерме тивӗҫлӗ пулса тӑраҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ епӗр ҫак калама ҫук пысӑк ӗҫ ҫарне тӗттӗмлӗхре тата нимӗн пӗлменлӗхре ӗнтӗркесе пурӑнма пама пултараймастпӑр. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ пирӗн ӗҫхӗрарӑмӗсем общӗствӑлла активлӑх ӳссе пынине тата вӗсем йертсе пыракан вырӑнсене тухса пынине, хамӑрӑн кулђтурлӑх ӳснине кӑтартакан ним иккӗленмелле мар пысӑк паллӑсем вырӑнне хурса хӗрӳллӗн саламламала".

Сатӑр кӑшманӗ акса тӑвакан уй-хирсенче ӗҫлекен колхозницӑсене йышӑннӑ чухне 1935 ҫулта Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

„Епӗр хӗрарӑмсен сӑмахӗсене итлерӗмӗр, анчах йалтах урахла хӗрарӑмсен сӑмахӗсене, епӗ калӑттӑм—ӗҫ героинђисем пулса тӑракан хӗрарӑмсен сӑмахӗсене итлерӗмӗр, мӗншӗн тесен ҫавӑн пек ҫитӗнӳсене ӗҫ героинђисем кӑна тума пултараҫҫӗ. Ун пек хӗрарӑмсем пирӗн ӗлӗк пулман... Ҫаксем вӗсем йалтах ҫӗнӗ ҫынсем.

...Ун пек хӗрарӑмсем ӗлӗкхи вӑхӑтра пулман тата пулма та пултарайман".

Пирӗн социализмла ҫӗршывӑри хӗрарӑмсем хайсен ӗмӗрхи чуралӑхне тата хӗрарӑмсем аслӑ та геройла ӗҫсем тума пултараймаҫҫӗ текен кивӗ те ҫӗрӗк теорийӗ тахҫанах салса ҫӗмӗрнӗ. Малта пыракан работница-стахановкӑсем, хӗрарӑм-инженерсем, хӗрарӑм-ученайсем халђхи вӑхӑтра ӗнтӗ вӗсем пӗччен ҫеҫ мар, вӗсем халђ—„массӑлӑн" шутланаҫҫӗ. Болђшевиксен партийӗ йертсе пынипе тата Сталин йулташ куллен тӑрӑшса пӑхнипе хӗрарӑмсем общественнӑй пурнӑҫра кӑна мар, тата йулашки ҫулсенче уйрӑмах наукӑна техникӑра ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен позицисене ҫӗнсе илсе пыраҫҫӗ.

Ахалтен мар ӗнтӗ, Гризодубӑва, Осипенко, Раскова йулташсен вӗҫев кунӗсене совет хӗрарӑмӗсем ҫӗнӗрен геройла ӗҫсем чылай тунине куртамӑр, Медникӑвӑ лђотчица ҫӗнӗ рекорд турӗ, чукунҫул транспорчӗнче паравуса тытса пырас техникӑна вӗренме хӗрарӑмсем сарлака йухӑм пуҫланса кайрӗ. Хӗрарӑм-машиниссем чукунҫул транспорчӗнче халђ ӗнтӗ пур.

Пирӗн хӗрарӑм-лђотчицӑсем сахал мар. Анчах йышӑнас пулать, сирӗн ҫак йулашки вӗҫевчен: „хӗрарӑм ҫулӗ—кӑмака патӗнчен алӑк йанахӗ патне ҫитиччен" текен калапра каланӑ пек шухӑшлакан ҫынсем пулнӑ. (Кулаҫҫӗ). Вӗсем—инҫете геройла вӗҫме хӗрарӑмсем пултарас ҫук, тесе шутланӑ. Есӗр тата, Гризодубӑва, Осипенко тата Раскова йулташсем консерватӑрсен ҫав халлапне ҫапса ҫӗмӗртӗр. Сирӗн алӑк йанахсем, Гризодубӑва, Осипенко тата Раскова йулташсем, Аслӑ Лапка океан пулчӗ, епӗр ҫул тӑршшӗ 6 пин километр пулчӗ. Есӗр совет хӗрарӑмӗсем мӗн тума пултарнине кӑтартса патӑр. Есӗр етемсен йышӗн тепӗр ҫурринчен—хӗрарӑмсен аталану историне ҫӗнӗ страницине уҫса патӑр. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, акӑ мӗн уйрӑмах хаклӑ пулса тӑрать: есӗр геройла лђотчицӑсем, паттӑрлӑхпа хайулӑх кӑтартнӑ талантлӑ лђотчицӑсем ҫеҫ мар, есӗр тата тайгари пит йывӑр условисенче тӳлӗммен хайулӑ, чӑтӑмла пултӑр, ҫавна арҫынсем нумайӑшӗ ӑмсанма пултараҫҫӗ. Есӗр хӗрарӑмсем—вӗсем ирӗклӗ те аслӑ совет халӑхӗн творчествӑлла вӑйӗсен аслӑ резерви пулса тӑнине ӗҫпе кӑтартса патӑр. Капитализм етемлӗхӗн ҫав резервине шӑнтса хунӑ. Социализм ӗҫҫынни хӗрарӑмӗсен кулђтурине, хайулӑхне, паттӑрлӑхне, ҫирӗплӗхне чӗртсе йачӗ, ҫӳлӗ пусма ҫӗклерӗ.

Ӗлӗк тата халђхи вӑхӑтра та чи демократилӗ буржуйла республикӑсенче те чӑннипе ӗҫҫыннисем ҫуклӑхпа тата тара кӗрешсе чуралӑхра асапланса пурӑнаҫҫӗ, хӗрарӑм вара икӑ хутлӑ чуралӑхра пурӑнать. Вӑл икӗ йенӗпе—ӗҫҫынни пулнӑ пирки тата хӗрарӑм пулнӑ пирки чура пулса тӑрать.

Халӗ ӗнтӗ пирӗн: геройла ӗҫ тунӑ совет хӗрарӑмӗ икӗ хут героинђа пулса тӑрать, тесе калама тивӗҫ пур. Халӗ ӗнтӗ Сталинла воспитани ӗҫҫынни хӗрарӑмӗсем валђҫи, хамӑр ҫӗршывра мирлӗ вӑхӑтра та тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те вӗсен творчествӑлла вӑйӗсене аталанса пыма ҫӗнӗ майсем уҫса парать.

Гризодубӑва, Осипенко тата Раскова йулташсем ҫакна кӑтартса пачӗҫ: Совет ҫӗршывӗнче халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ, пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене хирӗҫ ҫапӑҫӑва тухма кирек хӑш вӑхӑтра та хатӗр тӑракан героинђасем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Есӗр, йулташсем, пирӗн парти, пирӗн аслӑ Сталин пирӗн ҫӗршыв геройӗсем ҫине, вӗсем социализм строительствин кирек мӗнле фронтӗнче пулсан та—хуласемпе йалсенче, хапрӑксемпе савӑтсенче, чукунҫул станцисенче, совхозсемпе колхозсенче, инҫетри тайгара, совет ҫӗршывӗн центрӗнче—пирӗн хӗрлӗ, чаплӑ столицӑра—Мускавра пулсан та, мӗнле пӑхнине пӗлеттӗр. Пур ҫӗрте ҫӗршер, пиншер геройсем пур, вӗсене парти куллен-кун ҫитӗнтерсе пиҫӗхтерсе, ӳстерсе пырать.

Ҫак ернесенче анчах пичетрен „ПСК(б)П Историйӗ", Ленин—Сталин парти историйӗ тухрӗ. Ҫакӑ вӑл—пирӗн партин геройла ӗҫӗсем ҫинчен Ленин тата Сталин йертсе пынипе Аслӑ Октйабӗр револђуци кунӗсенче тунӑ ҫӗнтерӳсем ҫинчен, пирӗн халӑх ӗнер тата пайан пирӗн аслӑ Сталин йулташ етем историнче пулман пысӑк аслӑлахпа йертсе пынипе, чаплӑн йертсе пынипе тунӑ ҫӗнтерӳсем ҫинчен сталинла каласа паракан кӗнеке пулать. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, геройсемпе героинђасене епӗр йуратни, пирӗн партипе совет халӑхӗ йуратни савӑнӑҫлӑ уйавсенчи ӗҫ ҫеҫ мар. Геройсем вӑл—пирӗн аслӑ партин, пирӗн аслӑ халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса тӑрать. Пирӗн аслӑ парти тунӑ, вӑл йертсе пынипе пирӗн халӑх вуншар ҫулсем хушшинче туса пынӑ пӗтӗм геройла аслӑ ӗҫсем патша йӗрки пусмӑрлӑхне, чуралӑха, чухӑнлӑха хирӗҫ кӗрешнӗ ҫулсенче, ирӗке тухассишӗн кӗрешнӗ ҫулсенче тунӑ геройла аслӑ ӗҫсем, чуралӑх сӑнчӑрне татса пӑрахса капитализма пӗтернӗ чухне, граждан вӑрҫинче ҫӗнтернӗ чухне, халӗ, хамӑрӑн телейлӗ, пуйан, кулђтуралӑ пурнӑҫа тунӑ чухне тӑвакан геройла аслӑ ӗҫсем пурте пирӗн халӑхӑн, пирӗн аслӑ партин геройла кӗрешӗвӗнчен, савӑнӑҫӗнчен, ӗҫӗнчен тухса тӑраҫҫӗ.

Геройла рабочи клас, пӗтӗм ӗҫҫынни халӑхӗ хайсен геройла партине тунӑ, хайсен геройӗсене тӑваҫҫӗ. Социализм строительствин геройла самани геройла ҫынсем ҫуратать, геройла ӗҫсем ҫуратать.

Пирӗн ҫӗршывра буржуйла ҫӗршывсенчи пек мар, халӑх хушшинчен тухнӑ геройсемпе халӑх пӗр уйӑралми ҫыхӑнса тӑрать.

Халӗ, халӑх тӑшманӗсене, халӑхӑн телейне тума чӑрмантарнӑ, халӑх телейне пӗтерсе лартма тӑрӑшнӑ тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн, халӗ епӗр ҫӗнӗ ҫентерӳсем патне ҫӗнӗ вӑйсемпе пыратпӑр, пирӗн геройла ӗҫсем те ытларах та ытларах пулӗҫ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ, йулташсем, пирӗн халӑх хайӗн геройӗсене йуратать, акӑ мӗншӗн ӗнтӗ Гризодубӑвӑна, Осипенкона, Расковӑна пӗтӗм халӑх кӗтсе илет. Пурте, ваттисенчен пуҫласа пӗчӗккине ҫитиччен, вӗсен кунҫулӗ пирки хумханчӗҫ, вӗсен ҫитӗнӗвӗсемпе савӑнаҫҫӗ, пӗтӗм чӗререн йуратса вӗсене Сталинла хӗрӳлӗ салам калаҫҫӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Герой-лђотчиксене халӑх уйрӑмах йуратасси ӑнсӑртран пулман. Пирӗн авиаци—Сталинла индустриализацин ачи, лђотчиксем—Сталин йулташ йуратса пӑхса ӳстернӗ соколсем. Нимӗн ӳстермесӗрех ҫапла калама пултаратпӑр: пирӗн авиацине тӑваканни—Сталин йулташ пулса тӑрать. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). Авиаци—пирӗн ҫитӗнӳсене чи пысӑккӑн, аслӑн, чаплӑн кӑтартса параканни пулать. Пирӗн авиаци вӑй-хӑватне пурнӑҫри чаплӑ фактсемпе ҫирӗплетсе кӑтартнӑ, вӑл фактсене хирӗҫ фашисӑм лакейӗсем хушшинчен тухнӑ сӗмсӗр ултавҫӑсем те вӑй ҫитерейменҫҫӗ. Пирӗн туссем ҫеҫ мар, тӑшмансен те пирӗн самолђотсемпе пирӗн чаплӑ лђотчиксен пысӑк пахалӑхне йышӑнмала пулчӗ. Пирӗн самолђотсем инҫете тата ҫӳле вӗҫеҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыв пысӑк. Пирӗн ҫӗнӗ облаҫсене алла илсе пымала, ҫавӑнпа та Ҫурҫӗрте авиаци пысӑккӑн вӑйланни вӑл ӑнсӑртран пулнӑ ӗҫ мар.

Авиаци хуҫалӑх йенӗпе те, кулђтура йенӗпе те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Чкалӑв, Коккинаки тата виҫӗ паттӑр хӗрарӑмсен вӗҫевӗсем чи пысӑк крайпа Инҫет-Хӗвелтухӑҫпе ҫыхӑнса тӑрассине лайӑхлатаҫҫӗ, хӑвӑртлатаҫҫӗ.

Анчах, йулташсем, епӗр пӗр ҫакӑн ҫинчен кӑна шухӑшламастпӑр.

Пире капитализмла ҫӗршывсем хупӑрласа тӑраҫҫӗ, вӗсем хушшинче питех те агрессивлӑ, пире хирӗҫ вӑрҫӑ кӑларма тӑрӑшакан фашисла елементсем пур. Ҫавӑнпа та епӗр хамӑр самолђотсене инҫерех, ҫӳлерех вӗҫекен тума тӑрӑшатпӑр. Епӗр йут ҫӗрсене хапсӑнмастпӑр, анчах та, кам та пулсан пирӗн ҫӗрӗн пӗчӗк татӑкне те пулин хапсӑнма хӑйать пулсан, вара епӗр ӑна хамӑр самолђотсемпе хӑваласа ҫитсе хамӑрӑн таса совет

Йулашки 4-мӗш страницӑра)

Л. М. Каганович йулташăн сăмахĕ

„Родина" самолĕт екипажне кĕтсе илнĕ чухне пулнă митингра 1938 çулти октябĕрĕн 27-мĕшĕнче каланă

(Йулашки)

çĕрĕ çинчен кирек мĕнле агрессăра та хăвалаçа йăма пултаратпăр. Акă мĕншĕн епĕр хамăр самолĕтсене инçетерех те çÿлерех вĕçмелле тăвасшăн. Епĕр хамăр самолĕтсене хăвăртрах кайакан тăвасшăн, çапла тунипе пирĕн çĕре хапсăнма хăйакансене хăйсен территорийĕнчех пĕтересе хумала тăвасшăн. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хасан кÿлли патĕнче пулса иртнĕ ĕçсене пурте астăваççĕ. Йапони военщинин сĕмсĕр провокаторсем совет çĕрĕ çине тапăнчĕç. Епĕр пурте Сталин йулташăн историлĕ сăмахĕсене астăватпăр: „Çак мир политикине епĕр малашне те пур вăйсемпе, пур майсемпе туса пыратпăр. Пире йут çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар. Анчах хамăрăн çĕре те, хамăрăн пĕр вершук çĕре те никама та парас çук". Тăшмансем пирĕн çак пусăм çĕре илме хăтланса пăхсан, пирĕн Хĕрлĕ Çаран, Хĕрлĕ авиаци геройĕсем „вăрçă чĕртсе йаракансем çапнине хирĕç çапнипе" (Сталин) ответлерĕç.

Хасан кÿлли оборони вăхăтĕнче ытти хĕçпăшалсемпе пĕрле пирĕн авиаци те хăйне чаплă йĕнчен кăтартрĕ.

Хасан кÿлли патĕнче тăшмана „сĕмĕрсе тăкмала отпор, хăйсен сысна сăмсисене пирĕн совет пахчине килсе чикме пикенмелле мар отпор" пана (Сталин). (Алă çупаççĕ). Çак урока малашне Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă провокаторĕсем çеç мар, хĕвеланăçĕнчи провокатăрсем те хисепе илчĕр.

Пирĕн вара, хамăр çĕршывăн оборонă вăйне малашне те тĕреклетсе пырас пулаť.

Авиаци оборонăра пысăк вырăн йышăнса тăраť. Çавăнпа та Гризодубăвă, Осипенко, Раскова йултăшсен вĕçевĕ, Чкаловпа Коккинакин вĕçевĕсем пекех, Совет Сойузĕн оборонине тĕреклетет.

Хамăрăн геройлă-летчицăсене хĕрÿлĕн саламласа епĕр вĕсене тата пĕтĕм халăха калатпăр: çавăн пек çынсемпе, çавăн пек Хасан геройĕсем пек Хĕрлĕ Çарпа епĕр пирĕн тăван çĕршывăн таса çĕрĕсем çине тапăнма хăйакан кирек мĕнле тăшмана та пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма пултаратпăр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хамăр тăван çĕршывăн паттăр хĕрĕсем пирки савăнса, çĕкленсе пĕтĕм халăх хăйĕн кун-çулне, йуратуне çĕнĕ пурнăç тăвакан çине, коммуниссен парти çине, йуратнă тăван Сталин йулташ çине хураť, кашни ĕçсынни геройлăсемпе пĕрле хăйĕн çулпуçне калаť: есĕ çул кăтартса пыракан çăлтăр пек геройсене историлĕ аслă ĕçсем патне пымали çула çутатса пыратăн.

Есĕ çынсемшĕн, уйрăмах — геройлă-летчиксемшĕн ашшĕ пек чĕре çунтарса тăрăшни çĕршер, пиншер çынсен чĕрине геройла çĕнĕ ĕçсем тума çĕнĕ вăй паран. Парти йертсе пынипе, есĕ аслăн йертсе пынипе епĕр геройла çĕнĕ ĕçсем тума пултаратпăр. Илсе пыр есĕ пире коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патнелле, ĕçсынни егемлĕхĕн пĕтĕм тăшманĕсене пĕтĕмпех пĕтерессипатне. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ тата унăн çулпуçĕ, аслă çĕнтерÿсен организатăрĕ, пирĕн йуратнă тăван Сталин йулташ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Йалхуçалăх ертел уставне пăсни

Каменец-Подольск облăçĕнчи колхозсем йалхуçалăхĕн çулталăк хушшинчи ĕçĕсене „шута илсе çитереççĕ. Малтанлăха тунă сведенисемех тупăшсем пысăккăн ÿсни çинчен калаççĕ. Вăл тупăшсене колхоз уставĕ кăтартнă пек тĕрĕс валеçесси—кашни колхоз правленишĕн саккун пулса тăраť. Анчах та колхозсен, райçĕрĕç пайĕсен тата райĕçтăвкомсен хăшпĕр руководителĕсем ĕçкунĕсем тăрăх валеçмели укçа-тенкĕ тупăшĕсен тÿпине хĕссе, устава пăснă. Çапла, Ново-Ушицк районĕнчи Мартăн 8-мĕш йачĕпе тăракан ертелре ССР Сойузĕн Халăх Комиссариачĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеçни çинчен" йышăннă постановленине пăсса ĕçкунĕсем тăрăх укçа-тенкĕ тупăшĕсен 50 процентне çеç пама палăртнă.

Проскуровский районĕнчи Стуфчинецк йалхуçалăх ертелĕнче, капиталовложени валли палăртнă укçаран пилĕк пин тенкĕ сапатса йанă. Ку укçапа устав тăрăх 1939 çулта çеç усă курмала пулнă.

Çавăн пекех Красиловски районĕнчи Сушковецкри Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 13 çул тултарнă йатпа тăракан йалхуçалăх ертелĕнче те колхоз уставне пысăккăн пăснă. 139 колхозникрен 40 колхозник çеç пухăнна пухура инкубатăр станципе договăр тунă.

Городокски райçĕрĕç пайĕн бухгалтери инстуктăрĕ Кавитский пысăк преступленилĕ ĕç тунă. Вăл колхозран смета илсе хăй ирĕкĕпех сметăна чылай улăштарса колхоз килĕшмесĕрех райĕçтăвком президиумне çирĕплетме панă. Райĕçтăвком президиумĕ вăл сметăна çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Комсомол пурнăçĕ

Йалти комсомолĕцсемпе ĕçлессине лайăхлатмала

ШĂХАСАН. Иртнĕ суйлавсем хыççăн йалсенчи пуçламĕш организацисенче комсомол йышне ÿстерес, пур колхозсенче те комсомол организацисем тăвас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ. Кăçал çĕнĕрен 10 пуçламĕш организаци тунă. Анчах комсомолăн йалти пуçламĕш организацисене йертсе пырас, вĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе комсомол райкомĕ çителĕксĕр ĕçлет.

Комсомол райкомĕ комсоргсемпе комитет çекретарĕсене йертсе пымасť тата йертсе пырас ĕçре пултарусăр çынсем пулнине те çийĕнчех курса пымасť. Йамашри пуçламĕш организацин çекретарĕ пулса Иванов ĕçленĕ. Колхозра кулŗтмассăлă ĕçе йапăхтарнăшăн ăна кулŗтработникрен кăларнă пулнă, çакăн хыççăн пуçламĕш организаци çекретарне суйланă. Халĕ вăл комсомол организацин ĕçĕсене пĕр растратчике панă та, хăй йалтан тухса кайнă. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек çынсенчен çамрăксем хушшинче ĕçлессине, çамрăксене интереслентерекен ыйтусене татса парассине кĕтме çук.

1938 çулта районри колхоз çамрăкĕсенчĕн çĕршер çын комсомол ретне кĕчĕç. Вĕсем пысăк хастарлăхпа ĕçе хутшăнасшăн, анчах вĕсене порученисем парса ĕçе йавăçтарасси çителĕксĕр пыраť-ха.

Йалти комсомолĕцсем чылайăшĕ йертсе пырас ĕçсенче — колхоз председателĕсем, бригадирсем, ферма пуçлăхĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсене вĕрентсе, пулăшса пыни кирлĕ, анчах комсомол райкомĕ çакна асăнмасť те. Районри актив пухăвĕ те çулталăкра икĕ хут çеç пулнă.

Комсомол райкомĕн йалти комсомолĕцсемпе ĕçлессине лайăхлатмала, йалти комсомолĕцсен ÿсĕмне шута илсе пуçламĕш организацисене кирлĕ пек пулăшса пымала.

С. Соколов.

Пысăк çитменлĕхсем пулнă

ТРАК. Илйич йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацинче отчотпа суйлав пухăвĕ питĕ самокритикăлă пулса иртрĕ. Комитет çекретарĕ Илйин йулташ туса панă отчот тăрăх тухса калакансем ĕçри çитменлĕхсене нумай критиклерĕç.

Çĕнĕ комитет çекретарĕ пулма Илйин йулташах суйларĕç.

„Пчелкино" колхозра комитет çекретарĕ Павлăв йулташ хăйĕн отчотĕнче лайăх ĕçсем çинчен çеç чарăнса тăчĕ. Комитет ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Комсомолĕцсенчен 3 çынăн çеç порученисем пулнă, ыттисене активлă ĕçе йавăçтарман.

Павлăв йулташ отчотпа суйлав пухăвĕ пуласси çинчен комсомолĕцсене малтан пĕлтерсе хуман.

Пухура отчот тăрăх пренисем пĕтнĕ хыççăн резулŗуци йышăнас вырăнне, çĕнĕ комитет суйланă хыççăн тин йышăнчĕç.

Çĕнĕ комитет В. Йегорăвă йулташа çекретаре суйларĕ.

В. Иваншков.

Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Çулталăк планне срукчен тултарнă

Деткомиççи пĕрлештерсе тăракан предприйатисенчи рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем ăмăртăва хутшăннă хыççăн çулталăкри плана уйав тĕлне тултарма пулчĕç. Вĕсем халĕ илнĕ обйазателствăна пысăк хаваслăхпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Шупашкарти хапрăкри рабочи Г. Морозăв йулташ С. Тарасăвпа ăмăртса ĕçлесе икшер нормă ытла тултарса пыраççĕ. Мыслецри савăтра ĕçлекен Аборин йулташ хăйĕн ĕçне рационализациленĕ май нормăна 180 процент тултарма пуçларĕ. Сĕнтĕрвăрринчи Копылов, Романăв, Зимин йулташсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Çавăн пек, производствă планне срукчен тултарассишĕн пыракан кĕрешÿре паха тĕслĕхсем паракансем çĕршерĕн шутланаççĕ. Предприйатисенче ĕçлекенсен хисепĕнчен 35 проценчĕ стаханăвĕцсемпе ударниксем. Ку кăçал стаханăвĕцсен хисепĕ икĕ хут ÿснине пĕлтерет.

Çакă пĕтĕм плана тултарма пысăх пулăшу пачĕ. Деткомиççи çисçтеми октябĕрĕн 25-мĕш тĕлне 1938 çулти плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе çитерчĕ. Продукци кăларас хисепе иртнĕ çулхинчен 66 процент ÿстернĕ. Ĕç тухăçлахне 10 процент ÿстерме палăртнă пулсан, 28,5 процент ÿстернĕ. Продукци хакне йÿнетес плана та тултарнă.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿснипе пĕрлех ĕç укçи хисепĕ те нумай ÿсрĕ. 1937 çулта 9 уйăх хушшинче Шупашкарти хапрăкра ĕçлекен Федоçейĕв йулташ вăтамран 3282 тенкĕ илнĕ пулсан, кăçал çав вăхăтра 4442 тенкĕ илнĕ. Усĕм 35 процент. Стаханăвĕц Тарасăв йулташăн иртнĕ çулта 9 уйăхри ĕç укçи 3566 тенкĕ пулнă, кăçал 4963 тенкĕ. Кунашкал тĕслĕхсем темĕн чухлĕ илсе кăтартма пулаť. Вăл стаханăвла йухăмăн тивлечĕ.

Анчах Çĕмĕрлери тата Мыслецри савăтсем çулталăкри плана тултарайман. Вăл савăтсен коллективĕсен пайанхи задачĕ—хăвăртлăхсене ÿстерсе плана çак кунсенчех тултармала тăвасси.

Пур предприйатисенче те тавар пахалăхне лайăхлатас йенĕпе ĕçсем çителĕксĕр пыраççĕ. Брак кăларассине пĕтермен. Шупашкарти хапрăк тата Сĕнтĕрвăрринчи савăт директăрĕсем куллен кирлĕ таварсем кăларасси çине ответсăр пăхаççĕ. Хĕллене хатĕрленес йенĕпе пур ĕçсене те туса çитермен. Çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтермеле. Предприйати руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен ăмăртăва массăлăн вăйлатмала, пур предприйатисене те йаланах стаханăвла ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешмеле.

Зимин.

Шупашкар хулинчи аласта¢сен ăмăртăвĕ

Планран иртерсе пĕр мĕлйун тенкĕлĕх куллен кирлĕ таварсем кăларатпăр—çакăн пек лозунгпа хутшăнчĕç Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва Чăвашпромсойуз пĕрлештерсе тăракан промысла кооперации ертелĕсен коллективĕсем. Чылай коллективсем социалисăмлă ăмăртса стаханăвла ĕçленипе, илнĕ обйазателствăна пысăк хăвăртлăхпа, пахалăхпа пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Шупашкарти „Личный труд" ертел çулталăкри плана октябĕрĕн 15-мĕш тĕлне тултарнă. Ку ертелте 54 çын ĕçлеççĕ, вĕсем хушшинче стаханăвĕцсемпе ударниксем 28 çын. Стаханăвĕц Шакирăв йулташ нормăна 230 процент, Павлăв йулташ 214 процент, Ивановă 190 процент тултараççĕ. Вĕсем уйăхсерен 1400 тенкĕшер ĕçлесе илеççĕ.

Автомобилсем йусакан савăт ăмăртăва хутшăнса çулталăкри плана декабĕрĕн 15-мĕш тĕлне тултарма пулнă. Унта халĕ пур рабочисем те ăмăртса ĕçлеççĕ. Савăт тирсăран савăчĕпе ăмăртаť. Уйав умĕнхи ăмăрту пуçланнăранпа стаханăвĕцсен ретне 6 çын тăчĕç. Рабочисен хастарлăхĕ çав тери пысăк. Стаханăвĕц Кадодынцĕв йулташ çенťабĕрĕн уйăх планне 490 процент тултарса 1040 тенкĕ ĕç укçи илнĕ. Бронникăв, Иуркин йулташсем нормăна 250 процент тултарса пыраççĕ. Кун пек тĕслĕхсем нумай. Рабочисем хăйсен политикăлă-техникăлă пĕлĕвне ÿстерессишĕн хытă тăрăшаççĕ. Халŗхи вăхăтра 6 çын аероклубра, 6 çын вăтам шкулта вĕренеççĕ т. ыт. те.

Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен, „Красный Октябрь" тата ытти ертелсенче те пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем сахал мар. Анчах малта пыракан рабочисемпе стаханăвĕцсен, ударниксен опытне сарса пĕтĕм коллектива стаханăвла ĕçлекен тăвассишĕн пур çĕрте те тивĕçлĕн кĕрешмеççĕ. „Промкоопстрой" тата утилŗсырйо кантур руководителĕсем ăмăртăва йертсе пырассинчен пăрăнса тăмапиненнĕ. Стаханăвла ĕçлеме условисем туса паман, ăмăрту договăрĕсене пурнăçа кĕртнипе интересленмеççĕ. Стаханăвĕцсен ĕçне кăлартмаççĕ. „Промкоопстрой" ертел правлени председателĕ Шиманский йулташ кăтарту хăмине çакма вырăн тупаймасť.

Стариков.

Хапрăк-савăт шкулĕнче улшăну кирлĕ

КУСЛАВККА. Комбинат çумĕнчи хапрăк-савăт шкулĕ производствă валŗли кадрсем хатĕрлес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраť. Шкултан вĕренсе тухнисенчен халŗхи вăхăтра чылайăшĕ ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. А. Фирсăвă, Мозйаков йулташсем сменă маçтăрĕсем, Морсковă йулташ цех начаŗникĕ пулса ĕçлеççĕ.

1938—39-мĕш вĕренÿ çулĕнче хапрăк-савăт шкулне 150 ача вĕренме илмеле пулнă. Анчах комбинатри руководителсем, уйрăмах шкул директăрĕ Иванов кадрсем хатĕрлес ĕç çине çийелтен пăхнипе шкула вĕренме 85 ача çеç илнĕ. Вĕренекенсен пурнăç условине лайăхлатас тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ. Пайанхи куна 40 ача йахăн выртса-тăмали йапаласем çук пирки ăçта-кирлĕ унта выртса-тăрса пурăнаççĕ. Обшежитинче таса мар, тусанлă. Столовăй организацилемен т. ыт. те.

Шкул директăрĕ Иванов çитменлĕхсене кăтартса парсан çилленме пăхаť, хăйне критиклекенсене ĕçрен кăлараť. Акă иртнĕ çулта профком председателĕнче ĕçленĕ Сурикăв тата преподавателĕ Лобашов йулташсем час-часах Ивановăн ĕçĕсене критикленĕ. çавăншăн кăçал вăл иккĕшне те ĕçрен кăларчĕ. Критикăна йуратман директăр хăйне ан критиклеччĕр тесе ĕçе хăйĕн „сывăх тусĕсене" çеç илет. Халŗхи вăхăтра помполит пулса Ивановăн арăмĕ, завхозра—унăн тăван шăллĕ ĕçлеççĕ. Çаксем, паллах, пĕр-пĕрин айăпĕсене тăрă шыв çине кăларма мар, пытарса çеç пурăнаççĕ.

А. Мошков.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Йапони çарĕн Китайри тăкакĕсем пĕрмайах ÿссе пыраççĕ

Китай хаçачĕсем пĕлтереççĕ: Китайри вăрçă пуçланнăранпа 15 уйăх хушшинче Йапони çарĕçен тăкакĕсем уйăхсеренех ÿссе пыраççĕ. Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче йапонĕцсен ултă пин çын ытла пĕтнĕ, вăрçăн виççĕмĕш тапхăрĕнче вара йапонăцсен 300 пин çын ытла пĕтнĕ. Йапони çарĕ вăрçăн виççĕмĕш тапхăрĕнче йышăннă территори, вăл пĕрремĕш тапхăрта йышăннă территорирен виçĕ хут пĕчĕккĕрех. Йапонĕцсем йулашки вăхăтра йышăннă территори вăл—Йанцзы йуханшывĕ тăрăх тăсăлса выртакан ансăр йарăм тата Гуандун провинцин пĕчĕк пайĕ.

(ТАСС).

Германири фашисăма хирĕçле çамрăксен процесĕ

Октябĕрĕн 29-мĕшĕнче Германири фашиссен пичечĕ çапла пĕлтерет: Лейпцигра фашисăма хирĕç кĕрешекен çамрăксен политикăлă пысăк процесĕ пулса иртнĕ, вăл çамрăксене халŗхи фашисла йĕркене сирпĕтсе пăрахма хатĕрленнĕшĕн тесе айăпланă. „Судпа" миçе çынна айăплани çинчен пичет шарламасť. Çамрăксен ушкăнсен çитĕнсе çитнĕ членĕсене нумай çуллăха катăргăна йамала туни çинчен, çул çитменнисене нумай çуллăха тĕрмене хупса хумала туни çинчен çеç пĕлтереççĕ.

(ТАСС.)

Николай Михайлăвич Пржеваŗский

(Вилнĕренпе 50 çул çитнĕ тĕле)

Небесные горы текен сăртсен айламĕнче çуталса выртакан Иссык-Куŗ йатлă кÿлĕ хĕрринче гранитран ăсталаса тунă пĕр пысăк скала çĕкленсе тăраť. Çак скалапамĕтник тăрринче—сарлака çунатсемлĕ тем пысăкĕш амăрткайăк. Гранит çине: „Первому исследователю природы Центральной Азии" тесе çырса хунă.

Кунта 50 çул ĕлĕк, 1888 çулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче, вилнĕ Николай Михайлăвич Пржеваŗский ÿтне пытарнă пулнă. Иртнĕ ĕмĕрти çулçÿревçĕ—исследователсен хушшинче Пржеваŗский чи малти вырăна—йертсе пыракан вырăна йышăнса тăраť. Вăл Иевропăри учонăйсенчен пуринчен те малтан унччен никам та тĕплĕн тĕрĕслесе пĕлмен Центрти Азинчи ту-сăртсен хушшине пырса кĕнĕ. Хăйĕн географилĕ открытийĕсемпе вăл, тăвата хутччен Центрти Азире пулнă експедицийĕпе, çав районсенчи çутçанталăкăн халиччен пуçран шухăшласа çеç кăларнă картăсене йăлтах улшăнтарнă, фантазилĕ картăсене пăрахаçланă. Азин çĕнĕ карти çине Пржеваŗский тупнă çĕнĕ сăрт-тусем, йуханшывсем, халиччен никама та паллă пулман кÿлĕсем те кĕнĕ. Тибет сăрчĕ çинче Пржеваŗский чĕр-чунсен çĕнĕ йăхĕсене тупнă, зоологи тата ботаникăн аслă коллекцийĕсене пухнă. Вăл Монголи, Тибет тата Центрти Китай тăрăх 30 пин çухрăм ытла халиччен пĕр йевропейцăн ури пырса пусман сукмаксемпе çулçÿренĕ.

Генераŗнăй Штаб Академинче вĕренсе тухнă хыççăн Пржеваŗский Варшаври йункĕрсен училишчине истори тата географипе уроксем паракан преподавател пулса ĕçленĕ. Вăл çав тери лайăх педагог, анлă тавракурăмлă учонăй педагог пулнă. Вăл географипе, çутçанталăкри чĕр-чунсен пурнăçĕпе çав тери интересленни училишчăра ĕçленĕ чухнех усăмлăн палăрнă.

Пржеваŗский ăçта та пулсан Российăн айакри кĕтесĕсене пурăнма куçасшăн тăрăшнă. Часах вăл Иркутск хулине куçаť. Унтан Уссури крайне икĕ çуллăха командировкăна кайаť (1867—1869 ç.ç.) Çак çулçÿрев Азине тĕплĕн пĕлсе çитес ĕçри аслă исследавателĕн малали ĕмĕчĕсене татса пама пулăшакан çулçÿрев пулнă.

1970 çултан пуçласа 1886 çула çитиччен — 16 çул хушшинче Пржеваŗский Центрти Ази тăрăх тăватă хутчен паллă çулçÿревсем тăваť, çак çулçÿревсем хыççăн вăл пĕтĕм тĕнчипе мухтава тивĕçлĕ йат туйанаť.

Кашни çулçÿревре килнĕ-килменех Пржеваŗский хăйĕн експедицийĕ тупнă хакла открытисем çинче ĕçлеме тытăнаť. Пржеваŗский—аслă çулçÿревçĕ, çав вăхăтрах унăн литературалă таланчĕ те пысăк пулнă. Вăл çырнă кĕнекесем пичетленсе тухнă-тухманах масса хушшине саланса пĕтнĕ, пысăк интереспе вуланнă. Çамрăксем Пржеваŗский кĕнекисем тăрăх воспитани илнĕ, наукăпа интересленсе çутçанталăка йуратма вĕреннĕ. Пржеваŗский кĕнекисене Иевропăри пур чĕлхесем çине те куçарса пичетленĕ.

Çутçанталăка татах та тĕплĕнрех пĕлсе çитес тесе Пржеваŗский 1888 çулта Центрти Азине тепĕр хут тухса кайаť. Ку расра вăл хăйĕн умне иртнĕ експедицийĕсемпе çитсе курайман Тибета-Лхассу столицине çитме задачă лартаť.

Анчах вăхăтсăр вилĕм ăна çак задачăна пурнăçа кĕртме ирĕк памасť. Вăл хăйĕн çĕнĕ открытийĕсен çулĕ çинче, Иесык-Куŗ йатлă кÿлĕ хĕрринче вилнĕ.

Пржеваŗскин йачĕ пĕтĕм ăслăлăх тĕнчи умĕнче мухтавлă вырăн йышăнса йулнă.

Пĕчĕк фелйетон

Çын пуçĕпе шухăшлакан

Тутаркас районĕнчи Шипцов йулташăн пĕр стандартлă сăмах пур.

— Итле-ха Шипцов йулташ, сирĕн пата тĕрĕслеме йанă 15 ĕçйалкор çырăвĕ ĕнтĕ 10 уйăх хушши выртаççĕ, ответ хăçан паратăр?—ыйтаççĕ районри редакцирен.

— Мĕнле есĕр?—тет прокурор. Ăçтан-ха хăвăрттăнах пур жалăбă çине те ответ паратăн. Хам пуçпа çеç мар вĕт, ытти çынсен пуçĕпе те шухăшласа пăхмала.

Ирĕксĕрех ĕненме тивет. Прокурор прокурорах—кашни событине политикăлă хак парса саккун тăрăх вывăд тăваť. Прокурор хак парасса кĕтсе выртакан жалăбăсен хасепĕ ĕнтĕ Шипцов канцеŗаринче 50-ран та иртет. „Ударник", „Комбайн" „Çĕнĕ çул" т. ыт. колхозсенчи сатăрла ĕçсем çинчен çырнă жалăбăсем те 4—5 уйăх хушши кĕтсе выртаççĕ.

Акă тата, октябĕрĕн 17 мĕшĕнче пĕр жалăбă çине çапла ответ параť вăл: „Сообщается, что конкренные виновники в повышении цен на товары Соколов, продавец Хач. отд. и др. привлечены к уголовной ответственности".

Калăпăр „конкретные" сăмаха çырма пĕлменнишĕн Шипцов айăплă мар, анчах прокурор патне Сĕнтĕрте сушкă хакне ÿстерсе сутни çинчен çырсан Хачăк çинчен ответ илнинчен чăхă та кулмала. „Çын пуçĕпе шухăшласа" пăхрăмăр та Хачăк йалсоветне кĕрекен вунă йалта та Соколов хушаматлă çын çук. Хачăк кооперативĕн историнче те Соколов хушаматлă çын ĕçлемен.

Прокурор прокурорах—Соколов хушаматлă сутăç тупнă. Моладец!

Анчах темĕншĕн Шипцов йулташ тепĕр Соколов хушаматлă çекретара тупса лартаймасť. Кăçал 8—9 уйăх хушшинче çын çекретаре çитрĕ. Соколов хушаматли лекмерĕ. Вăл техничкăна та Соколовă хушаматлине шыраť пулмала. Виçĕ çул лайăх ĕçлесе пурăннă техничкăна А. Сорокинă йулташа ахалех ĕçрен кăларса сирпĕтрĕ.

Çапла кирлĕ, терĕ пулĕ ĕнтĕ. Сорокинă тимлĕрехчĕ вĕт, халăх сучĕн кантурĕ валŗли илнĕ вутта Шипцов арăмĕ çĕкленĕшĕн те мăкăртатса çÿретчĕ.

Вир. Мĕтри.

Колхозри кадрсен курсĕ

Трак районĕнчи çĕрĕç пайĕ колхозсенче ĕçлеме кадрсем хатĕрлес майпа курс организацилен. Курсра счетоводсен уйрăмĕнче 40 çын, ветеринарсен уйрăмĕнче 18 çын вĕренеççĕ.

Вĕренекенсем валŗли кашни кунах занŗатисем пуçланиччен политинформаци пулаť.

В. Иваншков.

Çула мĕншĕн йусамаççĕ?

Иванăври кирпĕч савăтĕнчен Шупашкара 18 километр. Çак çулпа ир пуçласа каçченех темĕн чухлĕ машинă иртет тата лашапа нумай çÿреççĕ. Анчах çул начарри çÿрекенсене питĕ тарăхтараť. 7 çухрăм хушши çул пĕтĕмпех лакăмлă, муклашкалă. Çавна пула çÿрекенсем 25—26 çухрăм таврă кайаççĕ.

А. Иванов.

Сăвă-йурăсем вĕренеççĕ

Медикассинчи (Трак р.) пуçламĕш шкулта вĕренекенсем Октябĕр уйавне тимлесех хатĕрленеççĕ: сăвăсем, йурăсем вĕренеççĕ, спектакŗ лартма репетицисем тăваççĕ. Шкулти хор йурăсем йурлама хатĕрлет. „Песня о Сталине" „Наша родина", „Песня о Ворошилове" йурăсене вĕренни те ĕнтĕ.

Дм. Йегорăв.

Автомашинă туйанаççĕ

Кăçал Чăваш республикĕнчи колхозсем государствăна аш-какай сутса 100 автомашинă, сĕт-çу сутса 17 автомашинă туйаннă.

Йелчĕк районĕнчи „МОПР" колхоз государствăна аш-какай сутса 2 автомашинă туйаннă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Хусанти „Йаналиф" савăт тăвакан

пичетлемели машинкă

тата

„Феликс" арифмометр

туйанас текен госучрежденисемпе организацисене Главширпотребăн (малтан Точмашсбыт пулнă) Канашри магазинне зайавкă пама ыйтатпăр. Зайавкăсене миçе штук, вырăсла-чăвашла, йе вырăсла алфавитли кирлине кăтартса виçе екземпŗар çырса памала.

Зайавкăсене 1938 çулти нойабĕрĕн 25-мĕшчен йышăнаççĕ.

ГЛАВШИРПОТРЕБ.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" издателствине

АСЛĂ БУХГАЛТĔР

тата

ÇЕКРЕТАР-МАШИНИСТКА

васкавлă кирлĕ

Аслă бухгалтĕрĕн ĕçукçи 450 т. пулаť. АДРЕС: Дом печати, III этаж, ком. 18. 2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 558 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест прома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58 × 84 п. л.